К С(чув)
А36
33004-чув

ЮРИЙ АЙДАШ

# ШĂПА



Национальная библиотека ЧР
4-033007

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

кар
К С(Чув)
А 36

ЮРИЙ АЙДАШ

# ШĂПА

САВĂСЕМ

Шупашкар
Чăваш кӗнеке издательстви
1991

ББК 84 Чув 7-5
А 11

ПРОВЕРЕНО
20 ю 1 0 ОКТ 2017

33007-чув

Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

**Айдаш Ю. Г.**
А 11 Шăпа: Сăвăсем.— Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1991.—111 с.

Кĕнекене тĕрлĕ çулсенче çырнă сăвăсемпе куçарусем кĕнĕ. Автор ытларах тантăшĕсен шăпи çинче чарăнса тăрать, вĕсен чун-чĕрипе ĕмĕт-шухăшне уçса парать.

**ББК 84 Чув 7-5**

А $\frac{4803710202-038}{М\ 136\ (03)-91}$ 21—91

ISBN 5-7670-0454-4

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1991 ç.

# АВТОР УМСĂМАХĔ

Пĕтĕм пурăнăç — театр тенĕ пирĕнтен нумай çул маларах пурăннă ăслă çынсем. Çапла каланипе килĕшме те пулать, мĕншĕн тесен унта та, кунта та — ĕçпулăм юхăмĕ, этем кунçулĕн асапĕ-кулăшĕ, ĕмĕтре чĕрĕлнĕ идеал, çав идеалшăн кĕрешни, çĕнтерӳсемпе çухатусем. Çак пулăмсем пĕр-пĕрипе тачă çыхăннă, тепĕр чух вĕсене уйăрса илме те çук. Кун çути улшăннă май япала хăй тĕсне улăштарнă пек, общество ăстăнĕ улшăннă май эпир те пулни-иртни çине тĕрлĕрен пăхатпăр. Тахçан тасан та мăнаçлăн курăнни вараланчăк сăнне уçса кăтартать. Пуçĕсемпе пĕлĕте перĕнесле çӳренисем чике старикрен те çӳллех марри палăрать. Ода е гимн шайĕнче ипранă сăмахсем — фарс кăна иккен. Иллюзисем çухалаççĕ...

Анчах та пурнăçа иккĕмĕш хут — лайăхрах!— пурăнма май çук. Кашни харпăр хăй биографине те хитрелетсе, юсаса çыраймĕ. Литературăра та çавах. Кайри ăспа ăсланни пачăх юрăхсăр пек туйăнать мана. Суйнипе танах вăл. Ан тив, вăхăтĕнче айван пулнă, пурне те курман, курма та пултарайман, çавна пулах манăн та хăшпĕр сăвăсенче халь вырăнсăр пек туйăнакании çук мар.

Кĕнеке «чăпарлăхĕн» тепĕр сăлтавĕ те пур: унччехи кĕнекесене кĕмесĕр юлнă темиçе сăвă вырăн тупрĕ кунта. Мĕншĕн кĕреймен тесе ыйтĕ вулакан. Хăшĕ-пĕрисен — вăхăчĕ çитмен, теприсем — ун чухнехи «эстетикăпа» килĕшӳллĕ пулман. Апла-и, капла-и — лайăххипе те, начаррипе те поэт хăй куракан пурнăç модельне сăнарлать. Унăн пултарулăхĕн çулне-йĕрне тĕрĕс хаклас тесен, çав мозаикăлла ӳкерчĕкĕн пĕр чулне те куçран вĕçертмелле мар.

**КУН ВЁҪЛЕНЧĔ —
КУН ПУҪЛАНЧĔ...**



* * *

Кӗр çути çывхарчӗ,
Хаклӑланчӗ вӑхӑт.
Çимӗк пек çухалчӗ
Çу шӑв-шавӗ хӑвӑрт.

Вӗçрӗ ушкӑн акӑш.
Пӑхрӑм — вӑтӑр çиччӗ.
Тӗк ӳкерчӗ тахӑш,
Пуçӑма тӗл килчӗ.

Акӑш тӗкӗпе пӗр
Туйӑнать шӑпам та.
Иртрӗ кӗпӗр-кӗпӗр,—
Сивӗнтӗм, тӑплантӑм.

Çут тӗнче янравӗ
Уçӑмлӑ та аслӑ.
Вӑратать манра вӑл
Урӑхла хавасլӑх.

Тӗлӗк мар хӑвартӑм,
Юмах мар кӗтегӗп.
Пуранӑ. Пурнатӑп.
Пурӑнӑп-ха тетӗп.

## ПУРНĂÇ ЮРРИ

Шăп. Нимĕн те чĕнмест киленĕçлĕ тĕнче.
Сенкер те ылтăн çил вăркăштарать тавралăх.
Пуçне çĕре тайса, тем шухăшлать туйралăх,
Юхмасть пекех Çавал хăвалăх хыçĕнче.
Ытарлă тăплăхра ăс-хавалне пытарнăн,
Ешенне Улăпла, сăртсем канмашкăн ларнă.

Вуншар çиппе тĕртсе тĕрленĕ пек ката —
Сарри те симĕсси... çут кĕмĕл, йĕс те пăхăр,
Ахахĕ те ĕнчи... Ытла илемлĕ — йăлтăр!
Çисет. ылмашăнать мĕнпурĕ халь кунта.
Асамлă сăрăсем. Тĕлĕнмелле ӳкерчĕк —
Çак мар-ши çут тĕнчен чи сулăмлă кĕтречĕ!

Пуçламăшĕ таçта... вĕçне курма та çук,
Вĕçет пек тем пĕрмай, анчах та çук вĕçни те.
Йăл çутă сăрхăнать сенкер тĕтрелĕх витĕр...
Ни кулă янрамасть, ни лăпкă калаçу...
Тăрна картиййĕ пек, мăнаçлă та салху кăшт
Ăстăнăм тӳпине йĕрлет пĕр ушкăн шухăш.

Вара хуллен-хуллен тавралăх вăранать.
Хуллен-хуллен таçтан килет пек сасă, сасă.
Куç умĕнчи сăна пачах та шуйхатмасăр,
Чунра кĕвĕленет, хаваслăн шăранать.
Кĕçех уп çеммине туйса илет мĕнпурĕ —
Тĕнче пулса тăрать пĕр вăйлă, хӳхĕм юрă.

Аслатилле кĕрлев чупать çав юрăра:
Çĕклет хĕм нарăсне çĕн ĕмĕр аргонавчĕ.
Тиран кермепĕсем ӳкеççĕ, арканаççĕ.
Çиçеççĕ сăн-питсем: ку — çепĕç, леш — кăра.
Çĕр чăмăрĕ çинче пĕр ĕмĕт тĕвĕленнĕн,
Илтетĕп, çĕкленет: «Сыв пултăр аслă Ленин!»

Мăнаçлă сасăсен чуна сиплен ăшши!
Хĕвел пайăркисем янраççĕ кĕмĕл саслăн,
Ларсах юрлать тăри вĕсем çинче хаваслăн,
Тавралăха тулать çурхи чечек шăрши.
Йăлтах ку — ăнтăлу, йăлтах — çунатлă яшлăх,
Этем мĕн авалтан ĕмĕтленен малашлăх.

Çапах та тем хуçать пăлханнă кăмăла.
Ах, тем пăшăрханать манпа пĕрлех ман юррăм.
Асап кĕвви-йĕрри, ылхан çеммийĕ пур ун,
Питлет вăл çĕр çинчи пур йĕрĕх-усала.
Ăна вăл ырăран яланлăх уйăрасшăн,
Чĕр пурнăç никĕсне ырра кăна хурасшăн...

Самант — каллех умра ытарайми тĕссем.
Сенкер те ылтăн çил варкăштарать тавралăх...
Эй, тус-тăванăмсем, пур ыр чĕреллĕ халăх,
Тĕнче пуçкăшăлне чечек тирен çынсем,
Çак пурнăç юррине ĕçпе чысран хывар-и,
Ăна ялан пĕрле, пĕр сасăпа юрлар-и...

* * *

*Г. Я. Хлебникова*

Сенкерлĕ пулĕç-и çулсемĕр,
Е ырлăх çăвĕ-и çӳлтен,—
Яш чух çуталнă ĕмĕтсемĕр
Ан уйрăлччăрччĕ пирĕнтен.

Вара чи юлашки самантăн
Сасси салхун янранă чух
Пĕр шухăш пулĕ: «Никама та
Намасăр юлнă парăм çук».

* * *

Çăтти-çатін! Çăтти-çат! —
Милĕк хыттăн калаçать.
Мĕн каласшăн-ши, пĕлместĕп:
Те шӳтлет, те ятлаçать.

Чи çӳлти лапка çинче,
Тутлă сывлăш ăшшинче,
Иккĕн пĕччене çапаççĕ —
Вăй вылять аллисенче.

Виçĕ тантăш, виçĕ яш —
Икĕ вырăс, пĕр чăваш —
Пĕр танкра çӳренĕ, çуннă
Харсăр, паттăр экипаж.

Ентĕ пăхăр вĕсене:
Йăлт кăларчĕç, ахăртне,
Аякри Афганистанăн
Сарă хăмăр тусанне.

Петрĕ кăмрак-кĕл шăрши
Юлчĕ сывă ӳт ăшши.
Мĕн кăна кăтартмĕ çавă
Çут тĕнчемĕр тамаши!

Кĕçĕр кӳршĕре улах.
Улахра сар хĕр пурах.
Иккĕш кайĕç-ха, пĕлетĕп.
Каймĕ виççĕмĕш, чăлах.

Ахальтен-и шăл çыртса
Кăларать вăл халь хыт сас:
«Пĕрех хут ман килмеллеччĕ
Тимĕр ещĕкре выртса».

Çук, тăванăм, юрамасть.
Паттăра сар хĕр манмасть.
Çавпашкал салтак шăпийĕ —
Вăл куççулĕ кăлармасть.

Эс те чăт, ан ӳк, вăй пух!
Чун-чĕре вутланнă чух
Пурнăçран хăвна ан уйăр,
Халăх йышĕнчен ан тух.

Çăлтăр çиçтĕр тӳпере,
Çын çӳретĕр тĕнчере.
Чĕрĕлĕх ялан сыв пултăр —
Вăл пăхса усрать пире.

* * *

Мĕн вăл—ансăр, мĕн вăл—тикĕс?
Мĕн вăл — икĕ утăмра?
Эпĕ халь — çырансăр тинĕс,
Эпĕ — хум, хумпа, хумра.

Леш сăнсен, леш сăмахсенĕн
Йăлăхтармăш лĕккине
Эп йăлтах сирсе çĕнелнĕ,
Тухнă чăнлăх чиккине.

Юрататăп — сыхланмасăр,
Вăркăнатăп çырана,
Кĕлтумасăр, асăнмасăр
Ни турра, ни шуйттана.

Теп, шуйттанĕ те, турри те
Хампалах çак сехетре?—
Пурпĕрех сĕм тăвăл витĕр
Ывтăнмашкăн пит хитре.

## ПЕР ЮЛТАША

Юлташӑм, мӗншӗн кулянан?
Ачу-пӑчу-п ҫӗтӗк сан,
Юратнӑ мӑшӑру-и чирлӗ,
Е тахҫанах калас тени,
Чунра чӗнмесӗр пурӑнни
Халь пӑвӑртать-и каҫлӑ-ирлӗ?

Теп, эсӗ тупсӑхлатӑн ҫеҫ?
«Ай-хай! Кунсем епле вӗҫеҫ!»—
Тесе, ҫухалнӑн пӑхкалатӑн,
Хальччепхине йӑлт йӳнетсе,
Пуласлӑхран темскер кӗтсе,
Шапмасӑр, сӳрӗккӗн кулатӑн?

Теп, кӗвӗҫӳ кӑшлать сана?
Уярлапсах пырап куна
Чӳречерен сӑнанӑ хыҫҫӑн
«Кайри — мала, хуркайӑксем!
Эп — юлтӑм. Иртӗр, ҫамрӑксем»,—
Теместӗн-и салхуллӑн, выҫҫӑн?

Теп, чӗмсӗр пулнӑшӑн ытла
Паян эс хӑвна ху ятлан,
Пачах ятлас килмест пулин те?..
Теп, вӑл та, леш те ҫуккӑ сан?
Теп, ҫур ҫынла кӑна пӑхан
Урамалла эс кантӑк витӗр?

Асту-ха, акӑ, аса ил:
Епле ун чух хитреччӗ ҫил,
Тӳпе ҫуса тасатнӑ пекчӗ.
Чечек ҫунать-и пахчара,
Хӗр йӑл кулать-и урамра,
Ҫӑвать-и ҫумӑрсен шерпечӗ?—

Йăлт вăрататчĕ ĕмĕте,
Кӳретчĕ çăмăллăх ӳте
Халаллă яшлăх пархатарĕ.
Мĕн пур пек пултарулăха
Тăван çĕре те халăха
Йăлтах парас килетчĕ мар-и!

Халь... Мĕн халь тин хаклашасси?
Çухалнă — çамрăклăх сасси.
Кунçул тылли те ватнă пулĕ.
Çапах та пĕл, юлташ, çакна:
Кунçул ватать çеç мар çыппа —
Çын аллипех пулать кунçулĕ.

* * *

Хастарччĕ ăсĕ, кĕлетки маттурччĕ,
Вылятчĕ пурнăç сăнĕ куçĕнче.
Пăшаллă, сухапуçлă çĕр çинче
Туссем те, тăшмансем те унăн пурччĕ.
Ӳпкевсĕр кĕтсе илчĕ çак куна
Çӳлти патшалăхри çĕнĕ хăна.

Ак халĕ амăшĕн вĕри куççулĕ
Ун сив çамки çине тумлать, тумлать.
Хĕрарăм макăрать те ыталать:
«Тен, шăнтăн та, тен, выçăхрăн та пулĕ».
Арçын выртать çĕн тупăкра. Анчах
Вăл амăшĕшĕн халĕ те ачах.

## ТАЛĂХ АРĂМ

Яланхи пек, трамвай чăнкăртататчĕ,
Вĕçетчĕ çăмăл юр йăлтăртатса.
Каçхи хулан шăршийĕ, сăн-сăпачĕ
Пихçанхинчен асамлă та таса.

Чĕре те ман çунат сарса вĕçесшĕн,
Хумхантармасть нимскер те халь ăпа.
— Аван-çке эсĕ, çутçанталăк!— тесшĕн
Сисмесĕрех хускатрăм тутана...

Ак, чарăнать трамвай. Кĕрет хĕрарăм.
Чирленĕ пек: ун пичĕ çуннипе,
Арçын аллисене, начар тумне,
Тĕрексĕр уттине эп асăрхарăм.

Вăл сивĕрен пытаннă пек хутланчĕ.
Чӳречерен тинкерчĕ те тула,
Ик куçĕнчен сасартăк кусса анчĕ,
Ик çăлтăр евĕр, ик вĕри тумлам.

Вăл пăхрĕ ман çине темскер каласшăн,
Анчах сăмахĕ ларчĕ-ши пыра?—
Чĕнмесĕрех йăл кулчĕ те ачашшăн
Каллех тинкерчĕ урама вара.

«Ан йĕр, аннем,— калас килетчĕ манăн,—
Сан асапна туять ман чун-чĕре.
Пĕлетĕп: пурăнманшăн макăратăн
Юратнă мăшăру çак тĕнчере.

Пĕлетĕп: вăл хăюллă каччă пулнă,
Юратнă юрлама та ĕçлеме.
Ют çĕр çинче ĕмĕрлĕхех вăл юлнă,
Тăван киле çитме ĕлкĕреймен.

Эс ху та шурă акăшран чиперччĕ,
Анчах та вăрçăн йывăр кустăрми
Сана кĕтмен çĕртен çапса ÿкерчĕ.
Чунна, ÿтне таптарĕ паллайми.

Çапах та эс ура çине çĕклентĕн,
Хуйху-суйху сан пулнă çын çинче.
Ĕçлерĕн, çĕнĕрен кулма вĕрентĕн —
Асаплă та асамлă çав тĕнче!

Ак халь эс хăнаран киле пыратăн,
Сасартăк хуçăлайрĕ кăмăлу...
Ан йĕр, аннем, мĕскершĕн макăратăн,
Сан пур-çке савăнмалăх ывăлу.

Чĕре суранĕ ыратать пулин те,
Ан пар ăна ытла хуçалапма.
Ку таранччен куççуль тăкни те çитĕ.
Эс юлнă мăшăрушăн пурăнма...»

* * *

(Ш ÿ т)

Лаша пекех вăл — çыракан:
пулать е мăнтăр, е хыткан.
Чарусăр е лÿппер пулать,
анаталла та чăхăмлать.

Анчах, туссем, асра тытар:
лашине мар —
лавне пăхар!

## ТЕЛЕЙ

Пӗлместӗп эп, тăванăм,
Телей мӗн иккенне.
Те урнă ҫил-тăман вăл
Каяс кун ирхине.

Те йăлтăр-йăлтăр ҫутă
Мала-мала чӗнни,
Хуштарнăҫем ҫӗн утăм
Чӗре тапса сикни.

Те, тăкнă чух пăр-ҫумăр
Ӗҫре е ҫул ҫинче,
Хаваслăн, ҫума-ҫумăн
Туссем юрланинче.

Телей... те вирлӗ ташă,
Те чечекри ӗшне...
Пӗлместӗп эп, юлташăм,
Телей мӗн иккенне.

## ТУНСАХ

Ҫава сасси вăратрĕ ыйхăран,
Текерлĕк тек эрленчĕ улăхра.
Чӳречерен кĕрет чечек шăрши,
Урайĕнче выртать хĕвел шăрçи.
Тупсам çава мана валли, аннем,
Тухса рете тăрам, пĕр киленем.
Амăртмалла çулар чун савнипе,
Чалт! сикчĕр шăрчăксем хăранипе.

Ҫулсан-çулсан, тен, тупăпăр çырла,
Аван ăна çимешкĕн çурмалла.
Ҫурри — сана, çурри — мана тесе,
Куçран куçа пăхса та именсе.
Кăнтăрлапа хĕвел шăраннă чух
Купа сулхăнĕнчен пахи те çук.
Анчах-мĕн сулхăнра та ун хĕмне
Туйма пулать, ларсан савни çумне.

Кăвар тăкать ун пичĕ те тути,
Куçа шартать ун куçĕсен çути.
Ҫапах та сулхăн капăçлăх пурах:
Аш хыпнинчен çăлан çăлкуç — çумрах.
Пĕрре кăна чупту ăна — чĕртет.
Ĕшеннĕ ӳт-пĕве вăй-хал кĕртет.

Ах, шăпчăк шăхăртать те шăхăртать.
Чун, шăпчăк евĕр, улăха туртать...
Анчах анне памарĕ çавипе —
Вĕçленĕ дворник газонра ĕçпе.
Кĕр-кĕр кĕрлет шăматкун ир хула.
Чăнах, эппин, чупас-ши вокзала?
Тăван яла анне патне çитес,
«Анне» тесе, çĕр сассине илтес...

* * *

Шăпа вылянчăк та чее,
Хăш чух сĕм-суккăр та киревсĕр,
Ун кăмăлне тӳрех пĕлмесĕр,
Аттеçĕм шапнă телее.

Хăй арăмне, хăй ывăлне
Часах курмашкăн ĕмĕтленнĕ,
Çавна пулах тăван килне
Вăл çырусем сахал çӳретнĕ...

Ак халь эп иртнĕ çирĕмрен,
Аннен те пичĕ пĕркеленчĕк.
Ларатпăр иккĕн каçсерен,
Умра — пĕртен-пĕр сăнӳкерчĕк.

«Аттеçĕм,— тетĕп шăппăн эп,
Хам йăлăнса куçран пăхатăп.—
Аттеçĕм, таврăн, эп чĕнеп,
Эп сансăр питĕ тунсăхлатăп...»

Çук, хускалмаççĕ тутисем —
Салтак чĕмсĕрлĕхе вĕреннĕ,—
Кăштах çемçелчĕç куçĕсем
Вăл мап çине пăхса киленнĕн.

Чĕнмест — çухатнă сассине...
Анчах пĕлетĕп-çке, аттеçĕм:
Хăлхапа мар — куп пек чухне
Чунпа пĕрне-пĕри илтеççĕ.

## САМАНТА

Мир кăвакарчăнĕ — Саманта!
Ачалла мар калаçавна
Эп манаймастăп пĕр самант та —
Вăл халь те пăлхатать чуна.

Анчах эс пурпĕрех ачаччĕ,
Чечек пек çутăччĕ куçу.
Тасалăхăн ачаш хăвачĕ
Çиçетчĕ эс йăл кулнă чух.

Эс туслăх ячĕпе юрлаттăн,
Тăван шыраттăн тĕнчере.
Ах, пĕчĕк хĕрĕмçĕм Саманта,
Эс халь те манăн **чĕрере.**

Сив хумлă океан леш енĕ
Кăшт çывăхрахчĕ эс пуртан.
Çуркуннепе садсем ешернĕн,
Чĕртеттĕн шанчăк кăкăрта.

Темле эп ăнланми усаллăх
Кĕç çухалас пекехчĕ те,
Çĕр пптĕнче çӳрен пур халăх
Çĕн сăн кĕртетчĕ ĕмĕте.

Шутлаттăм: акă, пăр тапранчĕ.
Ĕненмеллех-çке çын çыпна.
Çапах та пач сӳнмен çак шанчăк —
Тĕнче манман, манмасть сана.

...Мĕн-ма-ши тĕттĕм çын элчелĕ —
Май çук курма çул сулнăкне.
Паян та пĕчĕкçĕ хĕвелĕн
Эс çутататăн çынсене.

33007-чув

## АЧАМА

Пахчари чечек пек эсĕ,
Лĕпĕш пек те, пĕр тесен.
Сан ҫине куҫне илмесĕр
Ҫын пăхать хĕпĕртесе.

Чăн та пушă пуль ҫав сансăр
Ҫак ҫĕрпе тӳпе хушши.
Шăнкăрав сасси пек сассăр
Ҫук пуль пурăнăҫ ăшши.

Эсĕ ҫуттăн кулмасассăн,
Тĕксĕм курăнĕ тĕнче...
Кул, выля та ӳс хавассăн
Мир хĕвелĕ айĕнче.

## КĔРХИ ЮРĂ

Сывлăш япкăр тăрă,
Кăн-кăвак тӳпе.
Сарă ҫулҫă тăкрĕ
Вĕрене ҫилпе.
Уй-хирсем пушаннă,
Сасă илтĕнмест.
Нурпĕрех халь манăн
Кулянас килмест.
Ҫĕрĕм-шывăм аслă,
Курăнать инҫе.
Таврари хаваслăх
Ҫиҫрĕ пит ҫинче.
Ҫулҫă ӳкнĕ майăн
Кăлт! тапать чĕре.
Сывă пул, хуркайăк,
Киличчен тепре.

## МУХТАВ — МУСКАВА

Капмар хуласенче-и эп ҫӳретӗп
Е тырӑ пуссине чупса кӗретӗп,
Пӗччен-и е тус-пӗлӗш ҫумӗнче —
Мускав, ялан эс куҫӑм умӗнче!

Чуна ҫӗклекен пултарушан,
Ҫула чӗнекен ҫӑлтӑрушан,
Мухтав сана, ӗмӗр мухтав,
Ман пурнӑҫ чӗрийӗ — Мускав!

Сан ятуна ӗҫе тухать ман халӑх,
Телейлӗ, сывӑ пултӑр тет пуласлӑх,
Ӗмӗтсенчи хӗвеллӗ кунҫула
Кашнин хӑй аллипе хайламалла.

Чуна ҫӗклекен пултарушан,
Ҫула чӗнекен ҫӑлтӑрушан
Мухтав сана, ӗмӗр мухтав,
Ҫӗршывӑм чӗрийӗ — Мускав!

Эс чӗрӗлӗх ялавӗ те ҫӑлкуҫӗ,
Тӑнӑҫлӑха шанан ҫынсен ҫулпуҫӗ.
Сана пӑхать, сана итлет тӗнче —
Вӗри чӗре эс Ҫӗр кӑкӑрӗнче.

Чуна ҫӗклекен пултарушан,
Ҫула чӗнекен ҫӑлтӑрушан
Мухтав сана, ӗмӗр мухтав,
Планета чӗрийӗ — Мускав!

* * *

Виле кӳми пек,
Хуллен-хуллен çеç
Пырать машина
Поселок тарах.
Çынсем сасартăк
Тем тĕксĕмленчĕç,
Алсем шăнаççĕ.
Çапах та шăрăх.

Шăвать машина
Хуллен те хурлăн.
Янравлă шăплăх
Кĕрлет пин саслăн —
Пĕр ĕсĕклевĕн,
Пĕр чăрсăр юррăн,
Кĕç çурăласлăн,
Кĕç сухаласлăн.

Пуç хуписенĕн
Сăваплă чунĕ
Йăл çуталса
Хумханнă евĕр,
Шур юр çăвать те,
Çап-çутă кунĕ —
Юри контрастлă
Ӳкерпĕ тейĕр.

Шăвать машина.
Сар хăйăр çийĕн
Вырттарнă бомба —
Хура хĕрес...
Çапла, çапла,
Тĕнче вăрçийĕ
Пĕтмен-ха халь те,
Часах пĕтмест.

Ӳсет пит хăвăрт
Хули те ялё —
Е кăнтăрта-и,
Е çурçĕрте...
Мĕн чухлĕ бомба
Выртмасть-ши халĕ
Эпир çĕн пурнăç
Чĕртес çĕрте.

Куна... Куна-и?
Ав, çĕр чĕтренчĕ,
Аслаттилле
Ахлатрĕ сас.
Пĕри путланчĕ.
Теприн — черечĕ.
Мĕн ĕмĕр чыслă —
Чысрах тытас.

Анчах асран
Илсе тухаймăн
Çуралайман
Бомбăсене:
Нихçан та манмăн,
Нихçан та манмăн
Çĕршыв та халăх
Мĕн тӳснине.

* * *

Чӑнах сăлтав пуртан
Каланă тахçанах:
Хĕрӳ ĕçпе пĕр тан
Чунран тухан сăмах.

Вăл — йăлăпни те мар,
Улталани те мар,

Вăл — тутлăхла тымар,
Тасатакан кăвар.

Эппин, перо çыннин
Ан тутăхтăр пери.
Ун чунĕ те, эппин,
Ялан пултăр вĕри.

Вĕри хаярлăхпа
Вăл çаптăр киввине.
Вĕри хастарлăхпа
Шыратăр çĕннине.

Пĕр шухăш, пĕр саккун
Çыравçăн пулмалла —
Халăхупа эс çун,
Халăхупа юрла!

* * *

Анланăрччĕ, тархасшăн,
Суймастăп, тунмастăп:
Шăв-шав çеç тăвасшăн
Эп пурăнмастăп.

Тĕнчемĕр ĕнтĕ ватă.
Апла пулсан,
Хăв çамрăклăхна та
Ана парсам.

Ан тив, юну сан юхтăр,
Вĕри юну.
Çынсемшĕн юлтăр —
Сӳнми чуну.

## НЕФЕРТИТИ

Илем фараоншăн та — чăнлăх.
Ахаль пăлханать-и чĕре,
Курсан çав пике-турă сăнлă,
Хĕвел пек вут-хĕмлĕ хĕре?

Уттп ун Нилран та мăнаçлă,
Кулли тӳперен те таса.
Чунне ырă ĕмĕт вырнаçнăн
Пăхать вăл çиçсе-çуталса.

Асамлă ун çепĕç сасси те,
Ачаш кĕлетки те вĕри.
...Чипер-çке, чипер Нефертити,
Çунать фараонăн чĕри.

Анчах турăсем пархатарлă,
Выç куçлă храмри чӳкçĕсем —
Кĕçех патшана авлантарнă
Пĕр ылтăн купишĕн вĕсем.

Чăнах та, епле илĕртӳллĕ,
Епле ăраскаллă шăпа!
Кам юпĕ вĕремĕ хĕрӳллĕ
Кун евĕр хитре мăшăрпа!

Иркӳлĕм чупту та вăраххăн
Çӳрен лашуна хăвала —
Çарат кунĕпе вăр-хурахăн,
Вĕлер те çунтар, пусмăрла.

Каçпа Нефертити саламĕ
Каллех савăнтарĕ сана.
Вăл хирĕç сăмах-мĕн каламĕ,
Эс лăпкăн ыталăн ăна.

Çапла, фараон, эс телейлĕ,
Пĕлместĕн, мĕскер вăл хĕн-хур...
Анчах керменти сар хĕвелĕн —
Ун хăйĕн çавра çулĕ пур.

Çӳлти çăлтăрсен пек, çав çул та
Выртать тĕттĕмре, пушлăхра.
Вăл саншăн ытла та çап-çутă,
Эс уншăн çапах та — хура.

Хура, ма тесессĕн сăвапсăр
Ĕçӳ те пуян пурнăçу.
Хура, ма тесессĕн ыр ятсăр
Ырра ăмсанма тивĕç çук.

Мĕнех! Мĕн пултарнă эс — тунă.
Сăмах Нефертити çинчен.
Эс уншăн пĕр ĕмĕрлĕх пулнă,
Вăл халь те çыпсем хушшинче.

* * *

Сентябрь шăппăн çунчĕ кайрĕ.
Кĕл ӳкрĕ ыйхăллă çĕре.
Те вĕçĕ ку?.. Пуçламаш мар-и?
Тем улшăннă-ши тĕнчере?..

Каç-каç салхуллă фортепьянăн
Минорлă кĕввине илтсе,
Йĕрес килмест пĕрре те манăн —
Туятăп ĕмĕт çитессе.

Урамсенче çӳренĕ майăн
Курсан хитре хĕрарăма,
Çуркуннехи пек, пурнĕр лайăх
Ана савса пăхса юлма.

* * *

Шур кăпăкăн юхать ман ут çилхи...
Васкатăп — акă йăлăм, ак «Çилпи».
Ак йăлтăр сывлăмпа кĕвелпĕ ырлăх —
Чечеклĕ улăх та мăнаçлă хырлăх,
Палланă çурт, паллаиă сукмаксем...
Унччеихиллех, тахçанхиллех вĕсем
Манра пĕртен-пĕр туйăм вăратаççĕ,
Мана пĕртен-пĕр ĕмĕтпе туртаççĕ.

...Ир кайăкĕ хавас юрланă май
Кунта çыратчĕ сăвă Хусанкай,
Çут сывлăм шăрçине сăвва тиретчĕ,
Телейлĕ те, салхуллă та çӳретчĕ.
Туйралăх хупăрланăн юмана,
Эпир те хупăрлаттăмăр ăна.
Пултарнăскер, вăл тек хыпмастчĕ хăйшĕн —
Пире тĕпчетчĕ куçĕ: «Хăшĕ?.. Хăшĕ?..»

...Туятăр пуль, тата теприн палли
Кунта сӳнмесĕр сисĕнет... Шавли..
Астăвăр-ха, епле ытарлă кулă:
Пĕрре — çемçе, тепре — кăшт ютшăнуллă.
Сăвви пĕр ăшăччĕ, пĕр сивĕччĕ темле —
Шăпах кунти çанталăк темелле.
Чĕри çапла упа та кӳкĕрчепччĕ.
Халь вăл та кайрĕ — нӳрлĕ çĕр пĕркенчĕ.

...Çав хапхана та ав çав алăка.
Ĕнер кăна уçатчĕ-ха Алка.
Тыгса пăхсамăр алăк хăлăнне, тен,
Алка аллин ăшши те сисĕнет-и...
Кӳлле пырса тинкерĕр-ха вăрах —
Çав кӳлĕре ун чунĕ пур, пурах.
Тăп-тăрăччĕ вăл, витĕр курăнатчĕ,
Тертре те, телейре те — пурăнатчĕ.

...Тата теприн мӗлки тухать ума —
Кил, Элекçи пичи, кăшт калаçма.
Чунтан хисеплесе, ентеш тесе те
Сан ятупа пӗччен курка çӗклетӗп.
Кур: симӗс — хир-вăрман, сенкер — тӳпе.
Çӳретпӗр-ха эс савăннă çӗрпе.
Эс «Çилпире» сайра кăна пулаттăн —
Мăн Явăша нимрен ытла саваттăн.

Траль çăлӗнчен çулталăкра пӗрре
Шыв ӗçмесен, тем çук пек чӗрере
Тесе, хăвна, мана эс ӳпкелеттӗн,
Траль ман çăлкуç та пулнине пӗлеттӗн,
Халь, акă, эсӗ çук та — тем çитмест...
Анчах Траль çăлӗ шывлă-ха, типмест.
Вăл, Пурпăç пек, киленӗçлӗ те таран,
Вал пур — курку çеç тулмӗ тек, мăнтарăн.

...Пӗриншӗн — ют, теприншӗн — тус, юлташ,
Кунта çӳретчӗ юрласа Урташ.
Ача-салтак, калатчӗ салтакла вăл —
Вут пек вӗри те... савăлтан та савăл.
Е макăратчӗ тепӗр чух, кӳтсен,
Юрри вӗçсе тухас патнех çитсен.
Туятăп, çав тăварлă вут-куççулӗ
Ун юрринче куккук сасси пек юлӗ...

Пайтах вӗсем, пиртен уйрăлнисем,
Пире хевтеллӗ ӗмӗт панисем.
Юнашарах, пулсассăн та пăртак çеç,
Татах та аслă пиччесем утаççӗ.
Вӗсен пилне чунпа ăса хывса,
'Парар-и халăха чупа, ăса...
Çитет. Хыр тăррисем те ылтăнланчӗç.
Çӗн кун пуçланчӗ...
Тусăмçăм, тăпллаччӗ...

## ÇЫРАВÇĂ-ТУСĂМСЕНЕ

Ăстаксăр арçынсем сар хĕр тавра кумаççĕ,—
Пĕлесшĕн кăмăлне, туясшăн илемне.
Анчах хĕр куçĕсем вĕсем çине пăхмаççĕ,
Вăл пач та итлемест арсем йăлăннине.

Пĕр евĕрлĕ сăнсен кичем калейдоскопĕ
Ман кăмăлласкере йăлăхтарать кăна.
Вăл ним те шарламасть; вăл халь, Манон Леско пек,
Хăюллă юратуç, сана кĕтет, сана!

Çук, çук, эс ун умне чечек çыххи пăрахмăн,
Эс илĕртмĕн ăна чи хаклă чулсемпе.
Ун шурă аллине эс тытăн та вăраххăн,
Вăл пырĕ сан хыçран ăспа та мар — сĕмпе.

Сан мăкланман чуну, сан прĕклĕ ăсу та
Сан çирĕп кăмăлу йăлт çавăрĕç хĕре.
Çав юрату кайне эс тăвăп çутă-çутă,
Çав хĕрĕн сăнарне хăварăн ĕмĕре.

Ун кĕлетки пахи, ун туйăмĕн вăййи те,
Калаçăвĕ-кулли, сасси, утти — йăлтах
Ăсу-чуну тĕппе хĕвел шевли пек çитĕ,
Тин уçнă чăпăхла вăл тăрĕ умăнтах.

Анчах та эс — таçта. Пăхать çав хĕр кичеммĕн.
Сап-тăрă тӳпене, тавралăха сăнать.
«Мĕнле айван вĕсем, мĕнле пит чунсăр!»— тенĕн,
Халху арçынсенчен салхуллăн пăрăнать.

...Çапла, поэт-туссем, эсир те, тинкĕл-тинкĕл
Хуткупăс сассипе хăлха çĕртекенсем,
Пĕр тема хыçĕнчен чупатăр анкă-минкĕн,
Анчах сăвви-юрри пиçсех çитмест-çке тем.

Пиçсе çитес те çук. Ахаль-и вил мулкачă
Лекет, тет, яланах кахалтарах йытта.
Эппин, хăюллăрах, хастарлăрах пуласчĕ,
Савасчĕ — вилĕме çĕнес пек, тупата!

Пĕлетĕп, тусăмсем, ик вĕçлĕ çак патакăн
Пĕри мана хамах тивмешкĕн пултарать.
Эппин, умра — пĕр çул. Вĕçсем, Пегас, ан такăн!
Ав Муза, сарă хĕр, чеен пăхса тарать.

## МĂКĂНЬ

Йăм-хĕрлĕ мăкăнь лапкăн хумханать,
Ирхи хĕвелĕп ылтăп аллисем
Ачашшăн сĕртĕнеççĕ уп питне,—
Çитес йĕпе-сапаллă кунсенче,
Е кутсăр-пуççăр тăвăл çĕклепсен
Сыхлаймасран куляннă евĕр. Мăкăнь
Пĕлет хăй шăпине. Пĕр шикленмесĕр
Пăхать вăл аслă тӳпепе куçран,
Каланăн: «Эс хăватлă, эп имшер.

Анчах эс аякра, эп — çывăх, çывăх.
Эс вĕçĕмсĕр, ялаплăх, эп вара
Паяплăх çеç — çак куншăн, çак самантшăн —
Ав, çав пыл хурчĕпе çав хĕрачашăн.
Анчах эс ху та çав пыл хурчĕпе
Çав хĕрачашăн чиксĕр пысăк мар —
Вĕсен кĕске кунçулĕпех пĕр тан.
Эппин, кашни чĕр чуншăн эс те, эп те
Пĕр пек илемлĕ, пĕр пекех хăватлă...»

## ĔÇ ÇЫННИ

Çӳрет вăл çĕрпе пĕлĕт хушшинче
Йĕри-тавра пахча пек çут тĕнче.
Хĕвел çиçет, çут çумăрсем йăслаççĕ,
Турат иртет, çĕр кăпкатать пахчаçă.

Мĕскер кăна ӳсмест çав пахчара!
Хула та ял ларать унта çăра.
Унта металл та чул чечекĕ çиййĕн
Янрать хавасла çăлкуççен юррийĕ.
Унта пинцер çип çапнă пек çулсем,
Е кукăр-макăр лăпкă сукмаксем.
Унта плем акăшĕсем вĕçеççĕ,
Тăп-тăрă чăнлăх кӳллисем çиçеççе,
Тасалăх вучĕ йăлтăр шевлине
Сапать телей çеçкийĕсем çине.
Унта ялан çурхи симпыллă шăршă,
Астăншăн — вĕççĕрлĕх те ӳтшĕн — ăшă.

Ĕçлет пахчаçă, тек ĕçлет, ĕçлет —
Касать, иртет, чавать те тикĕслет.
Чеелĕх тымарне тăпăлтарать вăл,
Айванлăх йывăçне касса ярать вăл.
Анчах та сĕмсĕрлĕх чăтлăхĕнче
Ултав упăтисем — пĕтес тĕнче! —
Сикеççĕ, мĕлтлетеççĕ чĕкĕл-мекĕл
Кун çути пек тĕрĕслĕхпе тĕлме-тĕл.
Мещенлĕх мăкĕ пуснă шурлăхра
Ирсе çӳреççĕ сĕлĕхсем аран.
Ун варринче, шалта, пур тĕпсĕр авăр —
Вилмен, сывлать хаярлăх-динозавр.
Унта пуяслăх — выçă киремет
Çара çерçисене тытса çиет.
Унта шуйттан та турăпа тăванлă,
Анланнă пĕр-пĕрне: ав, ыталаннă...

Çӳрет пахчаçă хăйĕн пахчинче —
Çӳрет вăл çĕрпе пĕлĕт хушшинче.
Ун чĕринче — хĕрӳ хĕвел хĕлхемĕ.
Апа кунçул каяшĕ çĕнтереймĕ.
Вăл пултаруллă — çивĕч ăсĕпе.
Çупатлă вăл — тĕллев-ĕмĕчĕпе.
Пахчи ку — унăн чупĕ, унăн килĕ,
Тумхахлă ĕмĕрсен сăваплă пилĕ.
Çак пахчара пĕртен-пĕр вăл хуçа.
Эппин, хуçи пек пулĕ çак пахча.

## ИРХИ ШУПАШКАР

Апрель шăнкравĕ шăнкăр! янăрарĕ
Тумламсемпе те шăнкăрч сассипе.
Ирех тăрать ман ĕçлĕ Шупашкарăм,
Питне çăвать çĕп шуçăм шевлипе.

Çур сывлăшĕ халь çăкăр евĕр тутлă,
Кăвак тĕтрелĕх илĕртет хире.
Сăнсем те чĕресем пăлханчăк вутлă:
Кĕçех пуçланĕ кун хĕрӳ ĕçре.

Кĕçех ăшра упраннă ĕмĕт-шухăш,
Астăн та мускул хăватне кура,
Конвейертан машина пулса тухĕ,
Пир-авăр пулса юхĕ алăра.

Тулта — çурхи тивлет, çурхи хаваслăх!
Телейлĕ кулă-юрă юнашар.
Манпа пĕрле ĕçе утать уç саслă,
Çап-çамрăк чунлă шурă Шупашкар.

* * *

Эпир çĕр çипчех-ха çуралнă —
Хирсен те пывсен ачисем.
Эпир мăлатуклă, çурлаллă
Çĕршыв çитĕнтернĕ çынсем.

Лĕп çил вăркăшатчĕ пуç çийĕн,
Хаваслăн çиçетчĕ тӳпе...
Кĕçех тупăсен аслатийĕ
Пĕрлешрĕ сăпка юррипе.
Çерçи чĕвĕлтетĕвĕ витĕр
Такам ĕсĕклетчĕ аран.
Çурхи ешĕл курăк çути те
Хăш чух курăнатчĕ хуран.
Пушаннă пӳртре ларнăçемĕн
Тăнлаттăмăр та шăплăха,
Илтетчĕ вилес пек этемĕн
Хĕрӳ чĕнĕвне те халха.
Аттесĕр ачалăх тивлечĕ
Синкер хумĕпе çапнине
Сисетчĕ çав чунăм, пĕлетчĕ
Ун пăр пек шăнтан сиввине.
Умрахчĕ-ха — вăйă та кулă.
Умрахчĕ-ха — аслă тĕнче.
Çапах та ир çитнĕ салхулăх
Пурахчĕ кашнин питĕнче.

Вара (тен, ку Вăхăт паллипп?)
«Мĕскершĕн?!» текен куçсемпе
Сире эп сăнаттăм, ялйышăм,
Сана эп юнаттăм, тӳпе.
Эсир хыпăнса ăс памарăр,
Мăнаçлăх та тӳсĕм кăна
Кашнишĕн виçеллĕн пайларăр —
Çак çеç пуль çын турĕ мана.

* * *

*Геннадий Айхине*

Ах, Кратово ҫӑтмахӗ,
Пуҫ ҫавӑран тӗнче —
Сикет, тупман сӑмахӑн,
Пакша турат ҫинче.

Ҫырман строфа пек ҫуттӑн,
Сӗткенлӗн хӗрелсе,
Палане ҫупкӑм-ҫупкӑм
Ларать илемленсе.

Пуплет хура сухаллӑ,
Чӗр куҫлӑ ҫын манпа.
Эпир кӑштах тӑванлӑ,
Кӑшт ҫывӑх — ҫавӑнпа.

Ҫӑмӑлах мар ун ҫулӗ,
Ытти ҫынсен пекех:
Купҫул арманӗн чулӗ
Хӑйрать ӑпа текех.

Анчах та ӑшӑ кулӑ
Ун сӑнӗнче сӳнмест —
Пуртан-ши пултарулӑх
Асаплӑх сисӗнмест?

Ак халь шӳтлет вӑл ҫӑмӑл,
Аста, вӗри, йӑваш —
Тӗлӗнмелле ыр кӑмӑл,
Тӗлӗнмелле чӑваш!

Татса вулать те сӑвӑ
(«Р» французла тухать),

Темле хаваслă сăнă
Мана чунран сăхать.

Тахçан поэт çӳçеннĕн
Курсассăн демонне,
Хисеплĕн, чĕркуçленнĕн
Пăхатăп ун çине.

Вĕçет ăс-хал çунатлăн
Çак демон чĕннипе,
Алла пыман ансатлăх
Сасартăк çитнĕ пек.

Тăратăп та утатăп...
Вут хыпнăран ăша
Палан çырли çыртатăп...
Çӳлтен сăнать пакша...

* * *

Чăн, утмăлтурат пек тӳпе —
Кăваккăн çиçсе йăмăхать...
Пыратăп ыраш уйĕпе —
Ыраш юханшывăн юхать.
Чĕтренчĕк çунатлă уяр
Чăлтăрт сĕртĕнет те питрен
Сĕрлет сĕр, ĕрлет пĕр: «Курар
Епле ман çĕршывăм хитре».
Ах, тусăм, эс тĕрĕс суяп:
Çапла, çĕршыву сан пуян,
Анчах эс илсипĕ тĕнче
Ик йăлтăр çырма хушшинче.
Ак, манăн çĕршывăм тесен,
Вăл — вичкĕн вĕçен ĕмĕтсем,
Вăл — çутă телей çулĕсем,
Вăл — вĕçĕмсĕр ырлăх, илем.

* * *

«Çук, вилмĕп пĕтĕмпех...» Ан тив, çĕлен пек сăхчăр.
Туллаччăр киленсе чечек пек чĕреме —
Çунат-шухăшăма тăллаймĕ йывăр сăпчăр,
Эп тивĕç пурăнма, эп тивĕç çĕнтерме.

Халь пуш чӳлмек-пуçсем пичетлĕ хут çыраççĕ,
Чура чун-чĕрелли çӳлтин кусне сăнать.
Пăхсан, кашни-пĕри айван ăс е хăравçă.
Анчах ун пурăпас килет те — пурăнать!

Мĕскер вĕсемшĕн эп, мĕскер тепри вĕсемшĕн
Штамплană хут çинчи анкетăран ытла?..
Ах, йывăр сăмахсем, çырас килмест те темшĕн.
Анчах паян шăпах çырас пулать çапла.

Поэзи! Мĕскĕн хĕр. Пайтах чĕнмесĕр тӳсрĕн,
Пытартăн ăшупта хивре хĕв-шухăшна.
Параппаппа пĕрле сан чан сасси те ӳсрĕ,
Эппин, халь япраттар, халь кĕрлеттер ăна.

Систер хăв пуррине. Ман ятăма та пĕлччĕр.
Ирхи тӳпе пекех эп тăрă та таса.
Ик уйăх маларах. асту-ха, эп те кĕлччĕ.
Халь săввăм çĕнĕрен килет тан таптарса.

Тӳрре тухас тени ман çуккă пĕр тумлам та.
Тата... мĕскер хывас — ахаль те çарамас!
Ухмах тискерлĕхне эп çĕрмĕш хут ăнлантăм.
Татах ăнлапăп-ши? Пĕлместĕп. Шарламас.

Çак шухăпı ярăмне, тен, вăхăтсăр тататăп.
Ман таврари хахать çухалĕ тĕтĕм пек.
Çĕлен çурисене хаяррăн эп таптатăп.
Поэзи пурăнсан, эп вилмĕп пĕтĕмпех.

## ПĔЧЧЕНЛĔХЕ ХИРЕÇ

Ачана
Киле пĕччен хăварпă.
Çывăрать вăл,
Тĕлĕксем курса...
Тăчĕ шăппăн,
Анасларĕ тарăннăн,
Тĕрĕслерĕ алăка туртса.

Уçăлмасть.
Хĕвел шевли пĕр тапхăр
Кантăк витĕр кĕчĕ пӳлĕме.
Те юри-çке
Ирĕ питĕ капăр,
Пĕр саман
Пӳртре тăрас килмест.

Тусĕсем те чупса тухрĕç,—
Акă!
Ĕнтĕ кур,
Выляççĕ пӳскелле.
Мĕншĕн уçăлмасть-ши çав
Мур алăкĕ,
Таврăнмасть хăть амăшĕ киле.

Тăкăнчĕ куççулĕ
Пĕрчĕн-пĕрчĕн,
Чунĕ тапăртатрĕ, вăйлăн тăвăлса.
Халь тесен
Вăл халь тухса вĕçтерĕччĕ,
Ирĕке тухмалăх вăй пулсан...

Вăй пулсан...
Е пирĕн вăй сахал-и?
Пирĕн —

Аслисен, вăйпиттисен?
Çав-çавах хăш чух
Хупатпăр алăк,
Илтес марччĕ тул шавне тесе.

Пăхăсăр,
Таçта татаççĕ сăнчăр
(Калама çук пысăк çак тĕнче!),
Çуралать вара
Патшалăх-пăнчă
Ирĕклĕх хĕвелĕ айĕнче.

Пăнтăхмашкăн кунĕн-çĕрĕн —
Çитĕ!
Уçса ярăр читлĕхе
Яри!
Пурăнăç юррп те,
Çил уççи те —
Пуçсене
Кăшт уçăлтарччăр-и?

Читлĕх — вилĕм.
Пурăнăç тымарĕ —
Ялкăшап хĕвеллĕ таврара...
Çавăнпа
Йĕмешкĕн чарăнмарĕ
Пĕчĕкскер шалт хупнă алăкра.

## ФОТОГРАФ

*Юрий Гордеева*

Хура та шурă. Шурă та хура...
Çак икĕ тĕс куçать, вылять умра.

Е·ике тĕс кăна-и çут тĕнчен —
Ма уйрам сан вĕсем ыттисенчен?

Теп, эсĕ улăха тухса курман,
Теп, эсĕ май уявĕпче пулман?

Нихçан чечек паман, тен, савнипе,
Асăрхаман ун мăкăнь пек сăпне?

Мĕн тĕслĕ Атал хумĕ уярта,
Мĕн тĕслĕ ват аннӳн алли тата?

Куççуль мĕн тĕслĕ? Халăх тăкнă юн?
Мĕнле çак ĕмĕр? Тĕсĕ пур-и ун?..

Каçар, тăванăм, айăп-мĕн ан ту
Риторикăллă пулнăшăн ыйту.

Анчах, риторикăллă çеç тесе,
Ан иртторсем, аташăм, шӳтлесе.

Пĕлетĕп: эс çак çутă тĕнчене
Пайлатăн шурăпа хура çине.

Çапах та эсĕ усалпа ырра
Пăтраштармастăн икĕ сăрăра.

Апла-тăк, тусăм, эс ĕçлениччe
Пур тĕрĕслĕх, пур пысăк çут тĕнче.

# ÇĔР — ПУРĂНМА

Мăнаçлан, Тăван çĕршывăм!
Аслă халăх, мăнаçлан!
Пурăнатпăр чĕрĕ-сывă
Тăпăç пурăнăçпалан.

Хĕрĕх çул пăшал сассисĕр,
Тĕтĕм-сĕрĕмсĕр хирсем.
Хĕрĕх çул асап паллисĕр
Çитĕнеççĕ ачасем.

Хĕрĕх çул тăван ялавăн
Çентерӳллĕ çутипе
Ман çĕршыв утать — кур, савăн! —
Хăйĕн паттăр уттипе.

Ешерет-и халь тырпулă,
Хăпарать-и çĕн хула,—
Пур çĕрте те пултаруллă,
Çĕкленӳллĕ пулмалла.

Аттесем пилленĕ ирĕк,
Йăлтăр сывлăмлă çĕре
Кашниех сыхлатăр çирĕп,
Ĕмĕр тыттăр чĕрере.

Ун çинче нимле çич ют та
Тек ан хăйтăр юп тăкма.
Вăл — чечеклĕ, ăшă, çутă.
Вăл пуриншĕн — пурăнма!

## ПАХСА КАНА ЛАРАКАНСЕНЕ

Эпир ураран ӳкетпӗр,
Халран кайса.
Эпир усала чиккетпӗр,
Тӑпра чавса.
Эпир ӗçер те юнлӑ,
Паян та, кур.
Эй, хӑшӗ унта хӑюллӑ?
Тухсам, маттур!
Хитрех те кунсем вӗçеççӗ,
Темскер тарать.
Темскер пирӗнтен ниçеччӗ,
Халь ак!— тарать.

Çапах та эпир васкатпӑр
Каллех вута.
Таса чӑнлӑха шыратпӑр
Нимреп малтан.
Анчах та, пулать, йӑнӑшатпӑр,
Вара эсир
Епле тарӑхса йынӑшатӑр!
Эй, турӑ, сир.
Кӑштах чап шевли выртсассӑн
Пуççем çине,
Эсир те ӑна тытасшӑн
Серепене.

Çапла-мӗн: эпир — арена.
Эсир — залра.
Пире чӗрӗ юн хӗретнӗ,
Сире — сара.
Эпир пурнӑçпа тӳлетпӗр,
Эсир — укçан.
Эпир кашни кун вилетпӗр.
Эсир — хӑçан?

* * *

Паян — классикăлла хĕл кунĕ:
Хĕвел те, йăлтăр юр та пас...
Çĕнелнĕ çутçанталăк чунĕ
Юрлать нихçанхинчен хавас.

Çав юрăра — хула шăв-шавĕ,
Хир шăплăхĕ — çав юрăра.
Çерçи чĕвĕлтетни те савăк,
Вăл туй юрри пек янăрать.

Урам тулли утать те халăх,
Юлташ та пĕлĕш пек кашни;
Темле тĕлĕнмелле тăванлăх:
Пĕр пек — кулни те калаçни.

Анчах тĕлĕнмелли те çук-тăр:
Пĕр ĕç пырать çĕршывĕпе.
Пĕр ĕмĕт ялкăшать çап-çуттăн,
Пуриншĕн — пĕр кăвак тӳпе.

Çак пĕрлĕх — аркайми тĕп никĕс.
Уй çирĕплĕхĕ халь пире
Вăй-хал парать утмашкăн тикĕс,
Маттур пулмашкăн пур ĕçре.

Иртни историе ăсанчĕ,
Умра — çĕн çул та çĕн ниçет.
Çĕнтерӳсен çĕн асамачĕ
Малта чĕнӳллĕн йăл çиçет.

Ахальтен мар, эппин, хĕл кунĕ
Паян нихçанхинчен хавас —
Юрлатăр çутçанталăк чунĕ,
Хĕм сапчăр йăлтăр юр та пас!..

* * *

Ах, туйăмсем! Хăш чух эсир çаплах,
Авалхи пек, айван, киревсĕр.
Талантăм та чăлах сире пулах,
Ăс-хакăлăм хавшак, тĕревсĕр.

Сахал-и вăрăм ĕмĕрсем хушши
Кунçул тылли сире тыллана.
Хисеплĕ пурнăçăн сивви, ăшши
Çунатлаптарнă та тăллана?

Анчах эсир паян та ирĕкре,
Шевле те шыв е тăвăл евĕр...
Пĕрре — синкерлĕх, юрату — тепре,
Çĕклептеретĕр, вĕлеретĕр.

Йĕркесĕрсем... Ман вичкĕн юнăмра
Ялан вут пек çунасчĕ сирĕн.
Вара, тен, шуçăмлапĕччĕ умра
Поэзии пултаруллă ирĕ.

Перо та, хут та, шухăш та ун чух
Пĕрле пĕр çиçĕм çиçтерсессĕн,
Телей мĕн иккенне ăнланнă чун
Çав сарă куп çĕрне кĕрсессĕн,—

Тăванăмсем!— Сире ӳпкелеме
Ăçтан хăюлăх çиттĕр манăн?
Пĕлмешкĕн пурнăçа та вилĕме
Çынна турри хăй туйăм панă.

## МИНИАТЮРАСЕМ

* * *

Вăл ашшĕ-амăшне паллать. Анчах
Хăш йăх-тăпрен, çавна пĕлмест пачах.

* * *

Этем кунçулĕ ункă пек çавра:
Текех ташлатăн хăв шăпу тавра.

* * *

Шăши куççулĕ кушака тивсессĕн,
Мана та ăнсăртран палларăн эсĕ.

* * *

Çын ăшĕнче вут-çулăм явăнать,
Тĕлĕнмелле!— çавах çĕр çаврăнать.

* * *

Паян мана пĕр хуйхă вĕлерет.
Сыхлан, тăшман: таçта та халь черет.

* * *

Паян тусан ыран тăвассине,
Мĕскер тăвам-ши темĕн вичмине.

* * *

Тăват кĕтеслĕ çутçанталăкра
Нимрен те, никамран та ан хăра.

* * *

Саркайӑк пек савасчӗ мӑшӑра —
Аюк! Кунсем путаҫҫӗ шӑв-шавра.

* * *

Телей пулать, вӑл ниҫе мар-ха тетӗп...
Те вӑл кӗтет, те хам ӑна кӗтетӗп.

* * *

Кӗске те, вӑрӑм та этем кунҫулӗ:
Телей ҫитмест, йӑлӑхтарать куҫҫулӗ.

* * *

Туссем, хӑш чух эпир чӑнах хӑлхасӑр:
Чун вӑранмасть, вуниккӗ чан ҫапмасӑр.

* * *

Куллен икшер йӗрке сӑха-сӑха
Хуллен тухатпӑрах филосӑха.

* * *

Хӑшпӗрисем халь ячӗҫ пуль ташша.
Епле чӑтан: тӗвеҫҫӗ Айдаша.

* * *

Чӳк качаки хӑй пӑпине ылханнӑ,
Анчах чӳкҫи те тамӑках ҫакланнӑ.

* * *

Хăш чух мĕскĕнсене те хĕрхенетĕп:
«Шереметсем, мĕнле шăватăр?» — тетĕп.

* * *

Çапла, умри мура сайра куратпăр.
Аçа çапсан кăна хĕрес хуратпăр.

* * *

Сăвап пек, çылăх та хăш чух чысра —
Эпппи, нурах шуйттанлăх турăра!

* * *

Усал, эс чăн та Усалах пулсан,
Мĕн-ма сăнна йăл-йăл кулса пăсан?

* * *

Тĕлĕнмелле: тухать, тухать суя,
«Ăсчах» тесен те пуçсăр тăмсая.

* * *

Пихçан ан çун çын умĕнчи хăймашăн,
Çун шухăшна пурнăçлама хăйманшăн.

* * *

Сыхла хăв ĕмĕтне йывăрлăхра,
Инкекрен мар — эс ырлăхран хăра.

* * *

Икшер йĕрке, ик алă пек — юрат,
Ик çивчĕшлĕ хĕç пек — мура тура!

* * *

Шăла çыртса, чăтатпăр хурлăха,
Мĕн-ма-ши чăтаймастпăр пурлăха?

* * *

Çĕртен тухатпăр та çĕрех кĕретпĕр,
Анчах чунпа пĕлĕтеллех вĕçетпĕр.

* * *

Хуплу шăрши кулать, тет, хуплуран:
«Эп пулмасан, мĕскер усси санран?..»

* * *

Кама мĕнле вăл — пурăнăç тути:
Пыл çиекеншĕн йӳçĕ армути.
Армутипе кăна пурăнакан
Нихçан та хăнăхаймĕ пылака.

* * *

Тăрна пулкки ăсанчĕ. Вăтăр виççĕн...
Çулсем ăсанчĕç — вăтăр виçĕ çиçĕм.
Телейлĕ çул, эппин, каякана:
Ялан чысра йăлăхтарман хăна.

* * *

Чăн туслăх хăватне туйса курмасăр,
«Эп пурăнтăм» теме чăнах та кансĕр,

Анчах ĕненĕр, çав та пурăнман,
Кам ирсĕр тăшмана çĕнсе курман.

* * *

Те «йытă — çыннăн тусĕ» тенĕрен
Çыртма та эс, вĕрме те ĕлкĕрен.
Анчах «йытта — йыт вилĕмĕ» тени
Мĕскер вăл, анчăкăм, пĕлетĕн-и?

* * *

Мĕн калăп сан çинчен? Эс шухăшлатăн,
Анчах ялан-и шухăшна калатăн?
Куçран хăрушлăх сиввĕн пăхнă чух
Сан шухăшу та, сăмаху та çук.

* * *

Пĕри пăхать çĕртен те çӳлелле,
Теприн, мăнтарăн, куçĕ çĕрелле.
Çапах никам та татăклăп каламĕ:
Иккĕшĕнчен хăшне — шăпа саламĕ.

**ФИАСКО**

(Ш ӳ т)

Эп ун чухне путек пекех ачашчӗ,
Тен, путекрен те пулнӑ ачашрах.
Пӗтӗмӗшпе илсен, маттур ачаччӗ,—
Пулни-иртни ман халӗ те асрах.
Кипке ҫипче пӗччен выртаттӑм. Тӑвӑр.
Тем нӳрӗ пек, тем пӑчӑ пек тата.
Ман пурӑнас килетчӗ. Шутлӑр хӑвӑр:
Кӑшкӑрмасан, мӗн тӑвӑр, тупата?

Ак кӑшкӑрма пуҫларӑм. Кӑшкӑратӑп!
Эх, янрататӑп пысӑк хваттере!
Анне чупать! Атте чупать! Куратӑп:
Вырттарчӗҫ ӑшӑра та типӗре.
Ҫулсем иртеҫҫӗ. Эп шкула ҫӳретӗп.
Анчах... асап сахал-и пурнӑҫра?—
Лартаҫҫӗ «иккӗ»— кӑшкӑрса йӗретӗп,
Учитель «виҫҫӗ» паратех вара.

Кайран чылай ӑслантӑм, пысӑклантӑм.
Ҫапах Аполлонпа калаҫнӑ май
Кӗтмен ҫӗртен эп кӑшкӑрма пуҫлаттӑм —
Кӑшкӑраканӑн итлекен нумай.

Ӑнлантӑм эп: тӳпе ялан пӗр евӗр,
Ан тив, ылмаштӑр ӑрупа ӑру;
Ашак — ухмах, вӑрӑмтуна — чӗрнесӗр,
Ман тӗрӗслӗх те чыслӑх — кӑшкӑру!

Анчах та, шӑллӑмсем, усал ниҫан та
Телегрампа евит туса килмест:
Паян эп кӑшкӑртӑм! Эп хӑлаҫлантӑм!—
Пустуй: редакторӑн хӑлхи илтмест.

## ТĔЛĔКСЕН КУЛЯНЧĂК ТĔКĔРĔ



## ТУССЕНЕ

Таçта сăвăсем вулаççĕ,
Таçта çăлтăрсем çутаççĕ...
Такам куçĕсен вут-хĕмĕ,
Такам чĕрпне чĕртсе,
Çĕн шухăш, çĕн çул, çĕн ĕмĕт,
Çĕн курăм сĕпет, илĕртсе.

Вунçиччĕри хĕрупраçăн
Йăлт! сирпĕнекен çулăмне
Тытса чĕрене хурасшăн —
Телей те, асап та курасшăн
Уçать çамрăк çын кăкăрне.

Халь тăвăл сиксе урать-и
Шап-шурă хирсем çиче,
Хура чаршавсем карать-и
Декабрь салху каçсенче?
Е шавлă кунсен пăявĕ
Çыхать-и чечек пек чуна —
Çапах та туссен уявĕ
Хастарлăх парать мана.

Ухмахлăх, суя, айванлăх
Кăтартнă хăрушлăх çине

Апа çунтармалăх, хăртмалăх,
Вут-çулăм хурать чĕрепе.
Туссем сăвăсем вулаççĕ,
Туссем çăлтăрсем çутаççĕ.
Туссем юнашар та харăс,
Туссем манăн çил те парăс!

* * *

Хура çăхан крапклатрĕ пуç çинче.
Тахçан апай калатчĕ: усала вăл.
Юнатăп хыçалтан: «Пĕтсем ху, явăл,
Эп уйрăласшăн мар-ха туссенчен».

Çапах та сисĕнчĕ: тымарсенчен
Шăппăнтарах килет пек юн шăв-шавĕ.
Е чăн та путсĕр кайăкăн йыхравĕ
Хăватлăрах-ши чун йыхравĕнчен?

Юмах аван та — чăнлăх аванрах.
Эппин, çăханăм, йыхăр, йыхăрах.
Эп çын пулсассăн, çын ĕретлĕн кайăп.

Анчах юлать-çке чуптуман савни,
Куçран пăхса пĕрре те кулманни,—
Çаплах пире эс уйăрăп-ши, кайăк?..

* * *

Пăшăлтатса анчах, савнийçĕм,
Эп сан ятна ялан мухтатăп.
Тĕпче пек аслă та пуян эс,
Сан çиччен
Çăлтăрсене анчах калатăп.
Çынсем?
Вĕсемшĕн эс хитре те,
Мĕнле чи çепĕç туйăмсемшĕн
Вĕсем сан тулашна анчах кураççĕ.
Мĕнле сĕткен сана чун панă,
Мĕнле сĕткен сапра çӳрет,
Чупу, чечек пек, ешерет,
Мĕнле хăват санра нытаннă,
Мĕн чухлĕ вăрттăнлăх тата
Сан куçусен — хăш çăлтăр панă
Çав улшăнсах тăран вута,
Ăçтан çав çумăр пек ачашлăх,
Шевле пек кăмăл выляни,
Хĕвел те парăйман хаваслăх,
Асапланни те куляни? —
Çакна вĕсем пĕри пĕлмеççĕ,
Анчах та ыйтмĕç нихăçан...

* * *

Пĕр майлă пурăнăç шăватчĕ ман:
Телей те çĕклеместчĕ тӳпене,
Асап та кăтартмастчĕ чĕрине —
Юртать лаша — ни шухă, ни чуман.
Сасартăк шăплăх çĕтрĕ те таçта,
Ман ĕнтĕркенĕ чунăма чĕртсе,
Сан куçусем çĕкленчĕç хĕмленсе —
Тĕп пул вара йĕрке те, канăç та!..

* * *

Выртаççĕ тутлă тĕлĕксем
Хыр лăссисем çинче.
Тăванăм, ăнлансам, сиссем:
Ытла та эс инçе.

Ман тĕттĕмлепнĕ пӳлĕме
Эс кĕмĕн çав паян.
Эп хамăн йӳçĕ чĕлĕме
Туртнипе çеç пуян.

Эп хамăн вăрттăн шухăша
Пĕлтермĕп сынсене —
Йӳççи çеç кĕнĕ чух ăша
Туймастăн тутлине.

Ан тив, сăначчăр çав хырсем,
Мана тултан пăхса.
Айван вăл теççĕ теприсем.
Айван та эп — таса.

Эп, çав хырсем пек, яланах
Ем-ешĕл, пĕр тĕспе.
Пăрахмăп тин ку йăлана
Халь, ĕмĕр иртеспе.

Мĕскершĕн пурăнпă унччен,
Вăл халь те пуçăмра.
Сăпу та куç хупăниччен
Умра, умра, умра.

Анчах та йывăр-çке, сиссем:
Ытла та эс инçе
..Выртаççĕ тутлă тĕлĕксем
Хыр лăссисем çинче.

* * *

Пӗр рыцарь килет ҫапӑҫу хирӗнчен —
Ун турӑ лаши кӗҫенет тулхӑрса,
Ҫут хӗҫӗ ун хуҫӑк шӑпах варринчен,
Тумне те тӑшман таткаланӑ ҫурса.
Ун кӑкӑрӗ юнлӑ: аманнӑ чӗри,
Анчах чунӗ пур-ха — вӑл халь те вӗри!

Ак замок патне ҫитерет хура тур,
Кӗперӗ анать те, хапха уҫӑлать.
Кунтах аппӗ-амӑшӗ, йӑмӑкӗ пур —
Килйыш макӑрать, эрленсе хуҫӑлать.
Куҫсем чӗтренеҫҫӗ кӑвак тӗтрере,
Куҫсем асӑрхарӗҫ салхуллӑ хӗре.

Ҫӗре антараҫҫӗ аманнӑ ҫынна,
Кӗҫ ҫитрӗ ак пастор ӗҫе вӗҫлеме.
Кӗлтурӗ вӑл шӑппӑн, хӑй тӗллӗн кӑна,
Тепре вӑй парас пек сӳнен хӗлхеме.
Сасартӑк хускалчӗ те рыцарь хуллен
Каларӗ: «Мария, мӗн вӑрттӑн хӳхлен?»

Вӑй-халӑм ҫитетчӗ татах та вӑрҫма,
Тӑшман хӗҫӗпе тӑшмана турама.
Хаярлӑх та пурччӗ, лашам та сывах —
Эп ҫаврӑнтӑм килтӗм киле ҫав-ҫавах...
Мария... палларӑм та вилӗм сӑнне
Пӑхса илес терӗм тепре сан ҫине.

Ытла ан хурлан эс, савни, аса ил:
Епле каҫ хитреччӗ те ҫенӗҫчӗ ҫил.
Сенкер ҫӑлтӑрсем ҫакса янӑ тӳпе
Ҫиҫетчӗ, вылятчӗ ун чух пирӗнпе.
Пӗр кун ӑсанать те, килет ҫӗнӗ кун,
Ку — канӑҫсӑр ырлӑх, ку — вилӗмсӗр чун!

Халь пурте çухалчĕ. Чарусăр чĕре
Кĕçех лăпланса кĕрсе выртĕ çĕре.
Эппин, савпă тусăм, куçсем чĕрĕ чух
Санран вĕсене уйăрма халăм çук.
Хăçан та пулсан, тен, тĕл пулăпăр-и —
Шăпа çырлахсан?.. О, Мария!.. Мари...»

Шăпланчĕ те рыцарь, пике куçĕнчен,
Чăн-чăн юрату парни евĕр, таса
Куççуль юхса анчĕ — çап-çутă мерчен!
Тумларĕ вилнн çипелле пăтлатса.
Анчах та пĕр сивĕннĕ, хытнă ӳте
Ачашлăх парни кирлĕ мар ĕнтĕ тек.

...Кивелнĕ çак юрă. Çемми те таçтан
Салху ĕмĕрсен сĕмĕнчен илтĕнет.
Çапах чунĕ çамрăк ун. Пур кăмăлтан
Мана тем калать вăл, мана тем сĕнет.
Илемлĕ йăпатмăш-и ку е — ултав?
Кирлех-и ăна ман кая юлнă тав?

* * *

Юратмастăн мана, пĕлетĕп,
Анчах темĕн çухатнăн чĕре
Хĕсĕнсе, ыратса илет те
Антăлать эс çӳренĕ çĕре.

Эсĕ пур... телĕнсе сăнатăн:
Мĕн ырать-ши çак чĕмсĕр ача?
...Юратмастăн, телей сунатăн,
Чĕрене макăртатăн анчах.

* * *

Чăрсăр çилсем ĕрĕхеççĕ,
Ай, вĕлкĕшет сарă çулçă!
Манăн пилешĕм-пикеçĕм
Шăппăн çунать хурланса.
Сассăр ӳкет сарă çулçă...
Чунăм, савниçĕм, чĕкеçĕм,
Килччĕ, ан тăр вăтанса...
Пăхрĕ, ал сулчĕ, йăл кулчĕ.

Кăмăл каллех сулхăнланчĕ:
Кайрĕ сар хĕр васкамасăр.
Çăмăл кĕпи çеç хускапчĕ,
Канăçсăр туйăм чĕртсе.
Лăпкăн утать, васкамасăр,
Çамрăк чĕри, тен, пăлханчĕ —
Е хăраса, е кĕтсе.—
Кайрĕ, самах хушаймасăр.

Хыççăн çил пек вĕçтерем-и?
Тăкăрлăкра хуса çитĕп.
Вутлă ăшчикĕм вĕремĕ
Ик сенкер куç умĕнче.
Икĕ ачаш хулпуççи те
Хурлăн, ĕшеннĕн чĕтремĕ
Тĕттĕм каçра пĕр-пĕччен...
Тăкăрлăкра хуса çитĕп.

* * *

Йывăр мар курăнмашкăн çуттăн,
Анчах çутă пулма çăмăл мар...
Эс чечеп аллупа тытса çуртăн
Мап чечек пек ачаш чупăма.

Те йăли çавăн пек, те ухмахлăх —
Кив тĕнче йăнăшне çĕнетсе,
Хĕп куратпăр, тепри кулмалăх,
Ёмĕтсем çитессе ĕненсе.

Эх, ўсесчĕ ман, вĕлтĕрен пек,
Чашкăрса пĕр хўме хыçĕнче!
Пикамран ним ыйтмастăм эпĕ
Çутçанталăк чĕрçи çинче.

Халь ак хамăр куçсеп хĕлхемĕ...
Халь ак çепĕç алсен ăшши...
Чăн сапрах-ши тĕнче илемĕ,
Пурпăç пилĕ чăн эсĕ-ши?

Урăх çук-ши умра пĕр çул та?
Е çак тупсăх хĕстерĕ ялан?..
Çăмăл мар курăнмашкăн çуттăн,
Анчах çăмăл савма та памап.

* * *

Çук, паян мар, паян мар
Эпир тĕл пулатпăр санпа —
Çўрĕпĕр иксĕмĕр юнашар
Кайран, пĕрлешсен тусанпа.

Ун чух, ĕмĕрсем иртсен,
Эпир. алран ал тытса,
Çӳрĕпĕр çĕрĕпе, ирччен,
Пĕрпе-пĕри юратса.

Эп пулăп чипер, сăпай,
Пуçкăшăлĕ çыхăп пĕрмай.
Ман кăмăллă пуçу çине
Хурăп чечек илемне.

Вара, сан хура куçусем
Телейлĕн çиçсен умра,
Эп ярăп сасартăк йĕрсе,
Пачах вăтанмасăр хаман.

Сасартăк эп ярăп йĕрсе,
Эс кулăн, телейлĕскер.
...Анчах çĕр питне сирсе
Тухаймăпăр-çке.

* * *

Кĕрхи вăрман уçланкинче — çăлкуçĕ.
Тарăнăшне хĕвел шевли виçет.
Ун тăрă çийĕнче сап-сарă çулçă
Хуллен чĕтрет те прĕклĕн ишет.

Ман пурнăçра, çав çулçă евĕр, эс те
Çӳретĕн çăмăл, савăк та вăр-вар...
Анчах мĕн пуррипе телей теместĕп:
Çук, тĕлĕк мар та ку — телей те мар!

* * *

Çухал, кичемлĕх! Тĕссĕр тĕлĕксем,
Çерçи пасарĕ пек ан сĕрлĕр — сапаланăр!
Çурхи ăш çумăр пек, хĕвел шевли пек анăр,
Ман çул çине, телей чечекĕсем!

Ку таранччен чăтайрĕ-ха тесе,
Хура асапăмсем (кăштах вăтанăр!),
Хĕрес çумне ытла ир ан пăталăр —
Пурах умра халаллă сехетсем.

Эппин, вĕçех кунта, вĕçех, хаваслăх!
Кунçулăм пултăр ырă, пултăр аслă,
Чун тăвăлни ан пултăр ĕмĕрпе!..

...Шăпам, е эпĕ ытлашши ыйтатăп?
Каçар. Çапах пуçу тавра шутла та —
Парсам мана çак Шупашкар хĕрне.

* * *

Паян хĕвел пăхмарĕ темшĕн,
Кун каçипех тăрать тĕтре.
Пĕр йăл куласшăн, пĕр йĕресшĕн
Ман çирĕм виççĕри чĕре.
Ăна халь йывăр ăнланмашкăн,
Тăпа кĕртме те çăмăл мар.
Ăспа хушсассăн та: «Ан ашкăн!»
Чĕремçĕм ыйтĕ: «Ирĕк пар!»

Асапланать вăл, çĕмĕресшĕн
Ман хĕсĕк пӳлĕм читлĕхне.
Пĕр йăл куласшăн, пĕр йĕресшĕн...
Тулта тĕтре те... çуркунне...

## УТМĂЛТУРАТ

Çул пк айкки — пиçсе çитен ыраш,
Ыраш хушши — кăвак утмăлтурат.
Ан йĕр, савни, телей шыра-шыра,
Хура куçран куççулĕ ан тумлат.

Хаяр та пулĕ хĕлĕн сиввисем,
Çапах килет ем-ешĕл çуркунне.
Хаяр та пулĕ сан асапусем,
Çапах телей çĕкленĕ куç умне.

Вăш çил вĕрет те, хăмăл тайăлать,
Утмăлтурат кăвак çунса юлать...
Утмăлтурат кăвак çунса юлать,
Эс шыракан телей пек туйăнать,

* * *

Çут тĕнче те сан пек.
Вăл та, эс те — илем.
Ун ачаш сăнĕпе
Сан сăнна кĕвĕлем.

Иксĕрте те пĕр чун,
Пĕр хăват, пĕр çунат.
Пĕр пек çулăмлă юн
Иксĕрте те çунать.

Пĕр хавас, пĕр виçе
Иксĕрте те курап.
Пĕр тĕллев, пĕр инçет
Иксĕрĕн те умра.

* * *

Эп канăçсăр вилетĕп пуль.
Сивĕнекен алсем çине
Туссем юхтаракан куççуль
Тепре чун кĕртмĕ вĕсене.

Ан тив, пурне те ăнланам —
Ни йăлăнма, ни кӳренме...
Мĕн илнипе сапăрланам —
Ялан тем кирлĕ этеме.

Çапах та, юлашки вăйпа
Куçа уçсан, сана курсан,
Çунса тĕпренекен чуппа
Çунат сармашкăн хăтлансан,

Савни, эс хур та аллуна
Ман пит çине — кăштах йăл кул.
Асил чи малтанхи куна,
Ун чухнехи пек çутă пул.

Тĕнчен хаваслă каррипе
Сывлăшупа вĕл! вĕлкĕнтер,
Пурри манра та пулнипе
Самантлăха çеç ĕнентер.

Чун-чĕрене хытарăп эп,
Теп, тухĕ сассăм та — вара,
Асамлă çĕр сăнарĕ пек,
Яланлăх юлăн эс манра.

* *

Паян тĕтреллĕ кун.
Тавралăх тумĕ кивĕ.
Илемĕ çĕтнĕ ун.
Çанталăк нӳрĕ, сивĕ.

Асапланать-и, тен,
Ман евĕр, юратусăр?
Шăпи телейсĕртен
Пĕртен-пĕр савнă туссăр?

Хĕвелĕ те аван —
Курмасть: чулсем йĕреççĕ!
...Куççуль тухмарĕ ман —
Кĕлленнĕ-шим чĕремçĕм?

* * *

Кăлăхах юптаратăн, чунăм,
Е куç айĕн пăхса, е кулса.
Вăрттăн макăрăп, вут пек çунăп,
Анчах шанăп эс ман пуласса.

Ĕмĕтӳ халь таçтах çӳлте те,
Эс ыратăн пуль принцсене.
Пурнĕр темĕншĕн ĕненетĕп
Эс манах пиллессе чĕрӳне.

## АПРЕЛЕН ПĔРРЕМĔШĔ

Каллех тĕлĕнмелле инçет...
Каллех çурхи тĕнче çиçет.
Эп чупрăм тухрăм урама,
Юрларăм хамăн юррăма:

Апрелен пĕрремĕшĕ, тусăм.
Апрелен пĕрремĕшĕ, тусăм...
Çапах та ан суй, ан пытар,
Чунпа уçса пар.

Тăратăп эсĕ ман умра,
Аллу тытасшăн аллăмран.
Кăвак куçу чуна çĕклет —
Саппах, саппах пулас килет.

Апрелĕн пĕрремĕшĕ, тусăм.
Апрелен пĕрремĕшĕ, тусăм...
Çапах та ан суй, ан пытар,
Чунпа уçса пар.

Савсах-ши е суйса кăна:
«Саватăп»,— терĕн эс мана.
«Саватăп»,— терĕн те хуллен:
Пуçларăн юрлама пĕрле:

Апрелен пĕрремĕшĕ, тусăм.
Апрелен пĕрремĕшĕ, тусăм...
Çапах та ан суй, ан пытар,
Чунпа уçса пар.

* * *

*Геннадий Айхине,*
*унăн иккĕмĕш çамрăклăхне*

Такам ăрăмланăн сасартăк çухалчĕ тĕнче.
Мĕп пурччĕ, йăлтах таткаланчĕ, шĕвелчĕ те çĕтрĕ.
Ах, пĕтрĕм! Йăл çутă çеç çиçрĕ куçсем умĕнче —
Ах, пĕтрĕм.

Тăратăп-и эп халь, выртатăп-и эп, е мана
Асамлă çунат пĕлĕте-ши çĕклерĕ, пĕлместĕп.
Эп суккăр, чĕлхесĕр, пĕр сас та кĕмест хăлхана —
Илтместĕп.

Ăспуçăм та тĕнкĕ. Нимскер хускалмасть асăмра.
Чĕрем те, тĕпрен типсе ларнă çăл евĕр, пуш-пушă,
Йăл çутă анчах йăлкăшать те çиçет ман умра...
Хăрушă...

Темле, Апокалипсис вăйĕ пекех туйăнса,
Пĕрре çывхарать те тарать вăл,
хĕм сирпĕтнĕ майăн;
Çунать вăл хĕвелĕн те уйăхăн — çутă, таса
Вут кайăк.

Хуллен чăмăртанчĕ, чупланчĕ çав çутă; хуллен
Ăспуçăм та асăм ӳте таврăнать систермесĕр.
Эй, хăтлăх! Ку эсĕ иккен юхнă евĕр килен,
Ку — эсĕ!

Ку — сан кĕлеткӳ-мĕн, сан кăпăш çӳçӳ, куçусем,
Хуракăн çуначĕ пек мăшăр аллу-мĕн ку мамăк.
Эппин, сан куллуп чĕрепе тирекен йĕпписем —
Çак тамăк?

Çук, çук! Тамăк мар ку — çăтмах ку,
чăнах та, çăтмах:
Чĕрӳн ман пата туртăнан ăшшине эп туятăп.
Пĕр çаваншăн çеç сана хирĕç утма та пăхма
Хăятăп.

Мĕнле ытарас — илемӳ пĕр танах хăванпа.
Мĕнле ытарас — илемӳ турăсемшĕн те çӳллĕ.
Ни халь тĕксĕмлетмĕп ăна эп имшер сăввăмпа,
Ни ӳлĕм.

Кунта эс Пурришĕн — пур Чĕрĕлĕхе тав туса,
Тĕнче умĕнче сан ятна çеç калатăп: Оксана.
Чи çывăх састаш çеç япратăр ăна палăртса! —
Осанна!..

* * *

Тĕл пултăм эп сана пĕр ăшă, çутă кун,
Хĕвел йăпатнă чух тăп-тăрă шыв питне.
Куç килчĕ хуралса, кăрт! сикрĕ кайăк-чун.
Эс лăпкăн тинкерсе пăхсассăн ман çине.
Эп сисрĕм: чĕрере тем вăрттăн чĕрĕлет.
Хаваслăх-ши унта е канăçсăрлăх çеç?
Анчах та сан çине пăхас, пăхас килет,
Анчах та сан çинчен куçа илес килмест.
Таçти тинĕссенче кĕрленĕ хум сасси
Сан сассупа пĕрле вăранчĕ çĕнĕрен.
Кала: пулни-и эс е чăн та пуласси?
Сывпуллашу-и эс, е шанмалла чĕрен?
Çук, ним те ан кала... Çав вырăнтах тĕнче.
Тĕлпулăва кăна çĕр хут, пин хут мухтав.
Ан пултăр çеç суя куçу йăлкăшниче,
Туту пĕçертиниче ан пултăр çеç ултав.

---

* Ку строфан малтанхи 3 йĕрки — *Айхирен.*

* * *

Çурхи çутçанталăк
хĕвел хĕмĕпе йăлкăшатчĕ.
Йăмра кăчкăраччĕ.
Симпыл сăрхăнать сывлăшран.
Пин саслă тĕнче савăнатчĕ,
васкавлăн куçатчĕ,
Хăрана пек
ват ĕмĕрсен уттинчеп юласран.
Мĕскер тĕл пултарчĕ пире —
халь пĕлес те теместĕп.
Чăнах-ши, планетăсен пек.
пирĕн уйрăм кунçул?..
Мĕн-ма пăрăнмарăн? Май пурччĕ-çке.
Çитрĕн, чĕнместĕн.
Ман хамăн анчах пăрăнма та,
чĕпме те вăй çук.

Пăхаттăн çĕре эс.
Мана танлашсассăн, сасартăк
Куç ывăтрăн —
те ман çине, те кăвак инçене.
Кĕç çĕтрĕн-çухалтăн.
Тамарам эп хам та, уттартăм,
Шырарăм куç хăнăхнă,
çывăх, тăван сăнсене.
Мĕн калăн — пĕлетпĕр иккен çав
чыса упрамашкăн:
Ни эсĕ пăхмастăн,
ни эп пуççапмастăп сана.
Эпир халь кунтах та —
пĕрмен пуль пире тус пулмашкăн,
Эпир, теп, лере-ши
парнелĕн мана куллуна?

* * *

Çур çилĕ пек, яту çемçе те уçă —
Питрен лăпкать вăл, ыталать майран.
Анчах та темшĕн, иксĕлсе вăйран,
Çанçурăм пĕçерет ман, йывăр пуçăм.

Ах, çывăх, ах, ниçе эс, савнă тусçăм.
Пуласлăх ĕмĕлки тарать, тарать манран.
Ларатăп та пĕччен, янравлă шăплăхран
Хăранăн вĕтĕнсе чĕнетĕп: Люся, Люся...

Илтмест хура стена. Илтмест, илтмест-çке!
Йăмра кăна пăхать чӳречерен.
Яратăп саламсем — вĕсем çитмеççĕ.

Çапах çунса патраклапан чĕрем
Сан патналлах чарусăр ăнтăласшăн —
Те тăр-ухмахшăн, те шăпи çаплашан.

* * *

Хам вилĕмрен хăрамн пултăм
Çут тĕнчепе сăнанă май.
Анчах сан куçусем те сӳнессе
Пачах та ĕненес килмест —
Пĕр çавăнпа хăратăп вилĕмрен.

* * *

*(Д. Г. Байрон майлă)*

Çав вăхăта мĕнле ят парăп?
Ăна манаймăп нихăçан.
Ун чух пур чун-чĕре кăварĕ
Юратураччĕ ман та сан.

Туту пĕрремĕш хут тŭлек те
Ачаш сăмах калапăçем
Çитмерĕç сан патна, пĕлетĕп,
Ман чун-чĕре асапĕсем.

Епле эп тунсăхпа çунаттăм
Кайран, юратăву иртсен!
Мĕскер яланлăх пекчĕ — мантăн,
Эп çеç манаймăп виличчен.

Халь пĕр йăпанăç юлчĕ манăн:
Çапах та тахăш самантра
Иртнишĕн чăннипех хурланнăн
Калаçрăн эсĕ ăнсăртран.

Çапла, эс ырă та, хаяр та.
Теп, юратаймăн тек,— çавах
Сана пуриншĕн те каçартăм
Çав ŭкĕнĕç сăмахшăнах.

Эп çĕнĕрен телейлĕ пултăм,
Чунра усаллăх пач та çук.
Халь хуть мĕнле, хуть камăн пул та,
Эс пулнă манăн çеç уп чух.

## «ЧУЛОЧКА» ХЁРЕСЕМ

Ирхи шуçăм тĕрĕлет те
Çӳлле сăрт тăррисене,
Яланхи пекех илтетĕп
Кĕлесем шаклатнипе.
Чӳрече патне пыратăп,
Яр уçатăп та ăна
Вăрттăн куçăмпа шыратăп,
Савнă тусăмçăм, сана.
Ах, шак та шак тăваççĕ
Çăп-çăмăл кĕлесем.
Хĕрсем ĕçе каяççĕ —
«Чулочка» хĕрĕсем.

Ирхи шуçăм тĕрĕлет те
Çӳллĕ çурт тăррисене,
Яланхи пекех илтетĕп
Кĕлесем шаклатнипе.
Миçе хут иртсе кайман-тăр
Эсĕ пирĕн урампа,
Халлĕхе çӳретĕн мансăр,
Çӳрĕн малашне манпа.
Ах, шак та шак тăваççĕ
Çăп-çăмăл кĕлесем.
Хĕрсем ĕçе каяççĕ —
«Чулочка» хĕрĕсем.

* * *

Макăр, Муза, макăр...
Паян йăмăкпа пытараççĕ.
Çăлтăр куçлă Юрату
Сывламасть, сывламасть паян...

Макăр, Муза, макăр —
Паян йамăкпа пытараççĕ.

* * *

Эс тем калатăп —
Пăхатăп та чĕнместĕп.
Эс тĕлĕнсе кулатăп —
Кулатăп та чĕнместĕп.
Сўпетĕп, шăплапатăп —
Авлантăп эс те:
Чĕлхе калаçнă чух
Чĕремпĕп канăç çук.
Каç хыççăн шурăмпуçĕ килнĕ пек,
Эс килтĕн шурăмпуçĕпе...
Кĕтеттĕм те —
Килсен шарт сикĕп теттĕм.
Ак халь эс кун пек килтĕн,
Шăв-шавсăр, сассăр.
Эп тĕлĕнмерĕм кулнинчен.
Пĕр çав тĕлĕнтерет:
Мĕн чухлĕ шурăмпуçĕ килчĕ-кайрĕ — сансăр.
Мĕн чухлĕ çумăр çурĕ, юр вĕçтерчĕ — сансăр,
Мĕн чухлĕ йывăççем çĕкленчĕç — сансăр
Мĕн чухлĕ тухрĕ сар хĕвел те — сансăр.

Тата ак çак тĕлĕнтерет мана:
Ун чух кун тĕссĕрччĕ пек, шăпчăк — сассăр.

* * *

Аллу пите кăшт сĕртĕнет те,
Эп чĕрене итлетĕп:
Те савăнса кулать вăл,
Те макăрать ĕсĕклесе,
Хура каçсем килессине сиссе.

* * *

Кăвак куçсен ытамĕ,
Ытла эс аякра.
Тытасшăн та — тытаймăн,
Хĕсеймĕн кăкăра.

Халь манăн урăх шухăш,
Халь манăн урăх çул.
Ман хыççăн тек ан чуп эс,
Ачалăх евĕр юл.

Авăнчĕ эс чĕремшĕн
Чечеклĕ çуркунне.
Халь çав кунсен эрешĕ
Çухатрĕ асамне.

Халь манăн урăх ĕмĕт,
Эп урăх тĕпчере.
Поэзин йăлтăр хĕмĕ
Темрен те хитререх.

* * *

Ах, Матак, эп сана саваттăм,
Ах, Матак, чи таса çăлтăрна
Пуççапаттăм, сума сăваттăм,
Ĕненеттĕм чунтан ăна.

Чи хитре ĕмĕтсемччĕ манăн,
Чи хĕрӳ çулăмпа çунса,
Çутă кун чуппине те маннăн
Пурăнаттăм — вутран таса!

Тинрĕ-вĕçрĕ сирень хĕлхемĕ,
Юхрĕç-юхрĕç юрсем, шывсем...
Çутçанталăкан урăх çемĕ,
Çутçанталăкăн урăх тĕссем.

Камшăн пурнăçăм та шел марччĕ,
Камсăр пушăччĕ çут тĕнче,
Элеке тӳсеймерĕ, тарчĕ,
Халь вăл лăпкăлăх хӳттинче.

Теп, эп тивĕçсĕр ыйтрăм пулĕ
Пурнăçран кирлинчен ытларах.
Теп, пыра халь каплипă куççулĕм
Эп ютта панинчен тутлăрах?

Ĕненместĕп! Çĕнтерĕ ĕмĕт!
Ак, тепре ашкăрсан сирень,
Ун хаваслă та çутă хĕмĕ
Пĕрлештерĕ пире çĕнĕрен.

## УХМАХА ЕРНИ

Ах, епле савăнса эс култăн!—
Кĕç вĕçсе каясла çĕклепсе.
Çупатланчĕç куç харшисем,
Йăлтăртатрĕç хура куçусем,
Хĕм тăкатчĕ ачаш туту та...
Çиçрĕç, çунчĕç шап-шур шăлусем...
Хĕвелти панулми пек çуттăн,
Чĕр сĕткенлĕн те тутлăн-тутлăн,
Чыхăнса каясла эс култăн.
Ĕнтĕ пĕтрĕ пачах вăю —
Ахăлтатрĕ çаплах мăю,
Спккелерĕ, кулса, кăкăру...
Тăтăм,
Пĕтĕм пулса
Кăшкăру.

«Ăнлантарччĕ, мĕскер ку, мĕскер —
Эп çаппа-çарамас мар пуль-çке?..»

Шăп. Чĕпмерĕн эс. Майĕпен
Кайрăн, кайрăн çăка айĕпе.
Шăп. Пĕр чун та юлман тĕнчере...

Çук, суятăп:
Лерен, инçетрен,
Мĕскĕн клоун тухать тĕттĕмрен.
Урипче унăн — мĕскĕн пушмак,
Пуçĕнче унăн — мĕскĕн калпак,
Мĕскĕн шăмă туя — аллинче,
Кĕлчечскĕн çеçки — теприпче.
Ун пиншакĕ те мĕскĕн, шалпар,
Шăлаварĕ те ун чаплах мар...
Мĕскĕн клоун ларать те тарать,
Хăйпе хăй хăвалать те тарать,

Пĕр юрлать, пĕр кулать, шăхăрать —
Мĕскĕн клоун çынна култарать.
Вăл телейлĕ:
«Çынсем, кулăрах!»

...Ах!
Эс кайрăп-çке, кайрăп, кайрăп
Кĕркунне акăшсем вĕçсе кайпăп,
Кайрăн эсĕ çăка айĕпе,
Шурă юр шыв пулса кайнă пек.
Ырă мар, усалне те сунмасăр,
Кайрăн эс, алăпа та сулмасăр,
Пĕр сăмахсăр эс кайрăн, кайрăн...

...Клоун — мĕскĕн — палтах такăнайрĕ.
...Каялла çаврăнса та пăхмарăп.

...Тăчĕ клоун. Сана пуç тайрĕ.
Шăхăрмашкăп каллех пуçларĕ,
Юрламашкăп, кулмашкăн. Анчах
Пĕр шăпланчĕ те тăчĕ пачах.
Асăрхарĕ мана сасартăк,
Асăрхарĕ те усрĕ пуçне.
Утрĕ хирĕç мана. Эп хам та
Хирĕç утрăм, пăхса уп çине.

...Йывăçсем те çуртсем юлаççĕ,
Юлчĕ шурă кĕпер, вокзал.
Такамсем мана темĕн калаççĕ,
Куçрапах тинкерсе пăхса.
Эп утатăп, çаплах утатăп —
Мĕскĕн клоун утать ман пата.
Вăл утать, вăл утать — эп утатăп.
Эп утатăп — утать вăл татах...

Анчах темшĕн-çке, темшĕн-çке, темшĕн
Çул пит вăрăм çав мĕскĕн этемшĕн.

Питĕ вăрăм вăл маншăн та халь.—
Тен, утни те ахаль?..

Пулчĕ! Çитрĕмĕр!
Эй, эс, камит,
Мен куçна чаркалатăн пит?
Култарасшăн-им, шеремет?
Санăн мар-и куççуль чĕтренет
Куçсенче?..
Ах...
Аллу та, уру та сан кукăр...
Кĕлчечекĕн çеçки те суккăр...
Çурăму та, тĕвеп пек, курпун...
Эх, камит, эс — тăрлавсăр чун...
Кил, сана тăванла ыталам,
Ыталам, тетĕп — кил!— тăванла...

...Чим-ха...
Чим...
Мĕн ку — çул хĕрринчи
Пĕр-пĕччеиçĕ юпа пулчĕ-им?
Чăн:
   Юпа-çке ку.
Клоун çухалнă...
Уйăх, уйăх...
Çĕр пичĕ çуталнă...
Пĕр сас-чӳ илтĕнмест таврара.
Сан куллу —
Таврара.

## ÇУРАЛНĂ КУН

Паян ман — çуралнă кун.
Паян суртасем çутаççĕ,
Паян хăлхаран туртаççĕ —
Юлташ, ырлăх-сывлăх сун!

Çуралнă кун ман паян —
Сетел хушшине, туссем!
Çĕклер те хрусталь черккесем
Юрă юрлар ян та ян.

Юрă юрлар савăнса
Ачаш юрату синчен,
Хастар ĕмĕтсем çинчен,
Хуйха та суйха манса.

Паян ман — çуралнă кун.
Пайти те пĕр çавă ун:
Хыçра çул юлать нумайрах,
Сахал та сахал — умра.

Анчах та ӳт-пӳ чĕрĕ чух
Ана ӳпкелессĕм çук.
Апла-тăк, юратнă туссем,
Ярар-ха тепрер ĕçсе.

Пурри пирĕн пултăр пĕрле,
Çукки — чăвашла — çурмалла.
Пурри те пĕтет, пĕсмĕлле,
Çукки те çитет çаплалла.

Ĕçер те çиер, савăпар,
Хитре сăвăсем сăвăлар,
Чипер хĕрсене ыталар,
Ытти пире — кирлĕ те мар!

* * *

Сивӗ ҫил вӗрет халь кассӑн-кассӑн,
Авансах йӗрет ҫинҫе палан.
Ниепле туха пӗлмест ҫав касӑн
Йӑлтӑр асамачӗ асӑмран.

Сан аллу ун чух ман аллӑмраччӗ.
Ҫутататчӗ йӑл куллу сӑнна.
Хӑй вӑйне шанмасӑр, чун хӑратчӗ,—
Сан вӑю хӑратрӗ-ши ӑна?

Кӗҫ куҫран пӑхмасӑр ыталарӑн.
Сывлӑмна ҫаплах туять тутам.
Астумастӑп — мӗн-ши эс каларӑн,
Астумастӑп — чӗнтӗм-ши эп хам?

Тем самантлӑх урмӑшрӗ ҫанталӑк,
Ҫавӑрттарчӗ маннала сана,
Ҫӗр мӗльюн нухрат, кӑвак шӑналӑк
Парнелерӗ-пачӗ кайрана.

Халь хутран-ситрен сана куратӑп:
Эс пачах та улшӑнман. Пачах.
Ҫав астармӑш кӑкӑр. Ҫав хура та
Ҫиҫкӗн куҫ, йӑл кулӑ. Эй, анчах!..

Кун та ҫул вӗҫне те, пики дама,
Типпӗ ҫулҫӑ евӗр ҫаврӑнса,
Сан ҫиппен вӑлтса нимскер шутламӑп,
Маншӑн эсӗ — ҫӑлтӑр пек таса.

* * *

Ку хулара эп тăр-пĕччен.
Иртсе каяп хĕрсен кулли
Кăшт чарăнать те ман çинче
Сÿнет — çапла ĕнтĕ йăли.
Ку хулара эп тар-пĕччен...
Туссем те çук, туссем те çук...
Çÿретĕп, чĕмсĕр, тĕттĕмччен —
Тĕнче хуллен шăпланнă чух.
Ку хулара эп тăр-пĕччен —
Чĕнмесĕр килнĕ хăнасем
Хăтармĕç тунсăх ункинчен,
Хăйсем те тунсăх пек вĕсем.
Ку хулара эп тăр-пĕччен...
Мăнаçлă Атăл хумĕ çеç
Чунса анать те ту енчен —
Чĕнет хăйне инçе, инçе...
Вара килетĕп асăма,
Савниçĕм, эсĕ, пĕчĕкскер,
Ман чĕрене хĕрÿ пама,
Çунат пама çуралнăскер.
Сан куçусен ачашлăхне
Эп тепĕр хут сăнанă пек,
Сан юррусен асамлăхне
Эп тепĕр хут ăсаннă пек.
Сан аллусен ытамĕнче
Вăраннă свĕр тепĕр хут,
Каллех чĕремçĕм тĕпĕнче
Асаплăн çĕклепет хĕм-вут.
«Тăванăм, çăлтăрăм... савни»,—
Пăшăлтататăп та темччен,
Çук, илтĕнмест эс сас пани —
Ку хулара эп тăр-пĕччен.

* * *

Халь тĕлĕк те, юмах та çук
Ултав мĕнне ăнланнă чухнăн.
Пĕлетĕп: каç сĕмленнĕ чух
Эс ларнă вырăн юлĕ пушă.

Эс вăрттăн кĕмĕн алăкран.
Яланхи пек вĕри аллу та
Шуралмĕ манăн алăра,
Вĕрилентермĕ тек куллу та.

Папка саран çурхи çеçке,
Мана сĕткен пама эс килмĕн.
Ытла аван пĕлетĕп-çке:
Эс маншăн çĕтнĕ, пĕтнĕ, вилнĕ...

Анчах эпинн мĕскершĕн-ха,
Тӳпе кăштах çăлтăрланать те,
Каллех эп çул çине тухап?—
Е ырнă чун çапла канать-и?

Е вутлă кăкăрăм çумне
Сана тепре çеç чăмăртасшăн,
Эп тинкеретĕп инçене,
Ман çĕтнĕ ĕмĕтĕм, ачашăм?

Чĕнместĕн эс. Тусаплă çул
Сана ăсатнă... Кăлăх, кăлăх!..
Халь тĕлĕк те, юмах та çук,
Эс ларнă вырăн та — хăр-тăлăх.

## ЕНТРЁК

Шĕшкĕ çаралчĕ.
Майăр çĕрте.
Шăппăн çĕрет
Хăмăр çулçă.
Ешĕл сыранăм,
Эс инçетре...
Çамрăклăх,
Çамрăклăх
Юлчĕ.

Çамрăклăх юлчĕ.
Тек килес çук.
Тусăм,
Çанах та ан макăр.
Шăтнă карапăмăр
Путнă чух
Кирлĕ-ши,
Кирлĕ-ши
Яккăр?..

Юрă юрлар-и
Тинĕс çинчен.
Кайтăр
Хумсен янравĕ
Илтĕнтĕр,
Илтĕнтĕр вĕсенче
Пурнăç,
Пурнăç
Йыхравĕ.

* * *

Кĕнекесем çинчен мана калатăн,
Пăхмасăр çĕнĕ сăвăсем вулатăн.

Е йăпанатăн шухă тивĕсне —
Ун ирĕк кĕввипе, ун тĕсĕпе,

Анчах калаймăн-ши: мĕскершĕн халь
Ман чунăм сассăр макăрни — ахаль?

Вăл йăлăнни, ун тăвăлĕ, хавалĕ
Мĕскершĕн сан патна çитмерĕ халĕ?

Мĕскершĕн манăн «тусăмçăм» тени
Пулмарĕ саншăн тахçанах кĕтни,

Куççулĕ кăлармарĕ, вут чĕртмерĕ,
Мĕскершĕн ку? Эп ăнланма пĕлмерĕм.

* * *

Пирĕн ёлка питĕ капăр...

Юрăран

Сасартăк килчĕç кĕчĕç асăма
Тахçан каланă сăвă йĕркисем...
Епле эпир хавасчĕ, ачасем,
Эрешлĕ чăрăш тавралла тăма.

Никам ăна пĕлеймĕ ытарма:
Санать вăл хăй тавра нип-нин хĕлхем;
Янравлă юрă-кулă, такмаксем
Пуçлатчĕç чунсене вут хыптарма.

Кашни телейлĕччĕ... Телей, телей.—
Вăл шурă юр пек çутăр сан тĕле,
Хуллен хумхантăр, йăлтăр йăлтăртаттăр...

Çĕн çул çитет! Эппин, кивви ăсантăр!
...Симпыл курки çĕклене самантра,
Ман чăрăшăм, эп тăрăп сан патра.

## КОЛЬКАПА СТРОЙКА

(Ш ӳ т)

— Тĕп хулара мĕскер çĕнип пур, Колька?
— Паллах, стройка!
— Ĕçсем ăнса пыраççĕ, теççĕ, Колькăн...
— Ман мĕн? Вăт стройкăн!..
— Хĕрсем ытла саваççĕ, теççĕ, Колькăна...
— Çу-ук, стройкăна.
— Чăнах телейлĕ çын-мĕн эсĕ, Колька...
— Телей вăл — стройка.
— Пĕри пуçпех çухатнă имĕш Колькăпа...
— Çу-ук, стройкăпа.
— Тем лайăххи тупнах вăл Колькăра...
— Шел, стройкăра.
— Пĕр шит те уйрăлмасть вăл, теççĕ, Колькăран.
— Çу-ук, стройкăран...

* * *

Лапка-лапка ҫӑвать шур юр...

Лапка-лапка ҫӑвать шур юр, ҫӑвать,
Хура та ҫӗрсене шап-шур тӑвать.
Хаваслӑхпа ӗнерӗннӗ чуна
Аса килет тур ӑйӑр, ҫил ҫуна.

Эх, тытӑттӑм та кӳлӗттӗм пӗрре,
Куҫран пӑхтарӑттӑм черчен хӗре.
Сӑсар ҫухаллӑ тӑлӑп хӳттинче
Чуптӑвӑттӑм ӑна нар тутинчен.

Вӗҫин — тур ӑйӑр, юрӗ — ҫутӑрах,
Савни тути хӗмлентӗр-ҫунтӑрах!
Хыҫра выртса юлин те вӑрӑм ҫул,
Умри кӗске теме сӑлтавӗ ҫук.

Мӗскер чӗвӗлтетет-ши — кайӑк-ши,
Е шӑнпӑ пилеше татать пакши,
Е сарӑ хӗр кулать ахӑлтатса —
Тӗпче хӗвеллӗн кайрӗ ҫуталса.

Лапка-лапка ҫӑвать шур юр, ҫӑвать,
Хура та ҫӗрсене шап-шур тӑвать.
Шур кӑпӑк сирпӗтсе вӗҫет ҫуна,
Тӗпче ӗлкквенлӗхӗ ҫӗклет чуна.

* * *

Тӗнче сарлака та тарӑн,
Ҫынсем юнашар та пӗччен.
Мӗн чухлӗ ахах пуҫтарӑн
Хура океан тӗпӗнче.

* * *

Каç сăнĕ çапрĕ те куна
Нӳрленчĕ сывлăш, сулхăнланчĕ,
Хĕвел тусем хыçне пытанчĕ,
Саланчĕ шăплăх таврана —
Каç сăнĕ çапрĕ те куна.

Чĕкеçĕм, сансăр, пĕр-пĕччен
Эп тунсăхлатăп каçăн-ирĕн.
Ыгла аванччĕ пурнăç пирĕн,
Ак халь — пушаннă пек тĕнче,
Чĕкеçĕм, сансăр, пĕр-пĕччен.

Мана нумай та кирлĕ мар,
Сапрап çакна анчах ыйтасшăн:
Вĕçсе килсем купта, тархасшăн,
Пĕрле ларса кăшт лăплантар —
Мана нумай та кирлĕ мар.

Пăхсам ачашшăн ман çине.
Кăвак куçсен çемçе хĕвелĕ
Мана хăй шевлипе эмеллĕ,
Хаваслăх кĕртĕ чĕрене —
Пăхсам ачашшăн ман çине...

Çук, çук... Илтместĕн эс мана.
Телейсĕр ĕмĕтĕм саланчĕ.
Хĕвел тусем хыçне пытанчĕ,
Каç сăнĕ çапрĕ таврана —
Çук-çук. Илтместĕн эс мана...

## КĂКШĂМРИ ПЕРЕСТРОЙКА

(Ш ӳ т)

*А. Лукина*

Тăххăрта пуçланчĕ ташă.
Тĕрлĕ кĕвĕ янрашать —
Кăмăла пит мăкăлтасшăн
Акăш-макăш тăрăшать.

Мĕн калам, поэт — ача вăл:
Эп те тупрăм яш инке.
Туйрăм-ха: унра тем явăл
Систерет пек инкеке.

Тулĕк куçĕ йăл çиçет те,
Ачашлать пек те алли —
Ташламастăп эп, вĕçетĕп.
Ним те çук пуç ватмалли.

Çăлтăрсем сывлаççĕ ассăн,
Аптратмасть варăмтуна.
Питĕ кăмăллă пулассăн
Туйăнать çак çĕр мана.

Ёнтĕ чăтăмсăр кĕтетĕп
Ташă касĕ пĕтессе.
Пĕтсенех таратпăр тетĕп
Пĕр-пĕр вăрттăн кĕтесе.

(Ах, мăнтарăн яшлăх вучĕ
Ма-ши халь те çунтарать?
Ма-ши çамрăклăхăн учĕ
Халь те çĕр чавса тăрать?..)

Сӳнчĕ кĕвĕ. Кĕтнĕ ырлăх!
Кăртлатса тапать чĕре.

Пу халь тетĕп вĕтлĕх хырлăх
Улаха чĕнет пире.

Çук-мĕн çавă. Шанпă кайăк
Тухнă вĕçнĕ йăваран.
«Тавтапуç. Ташлатăн лайăх,—
Илтрĕм эпĕ.— Пултаран.

Ывăлсем кĕтессĕ авă...»
Чăпахах-мĕн. Тамаша!
Ах, тухатмăш карчăк! Явăл!
Санăн-и çӳрес ташша.

Çин арла эс прĕн-каçăн,
Çых чăлха е тĕр тĕрле.
Тем шут кĕчĕ-тĕк хальхаççăн —
Чăт, ан тух ташша çĕрле...

Тарăхса çапла утатăп.
Тусăм куçăн тем йĕплет.
Эс, тет, ху та ĕнтĕ катăк.
«Перестройка!»— текелет.

Перестройка! Ĕнтĕ курар:
Кăкшăмра та çĕн тĕнче.
Хĕрупраç-мĕн çук, эй, турă,
Йăлт ача — картишĕнче.

Янкăс саслă çав вĕт халăх
Амăш аркинчен хăпмасть.
Çук, куçпа савса пăхмалăх
Пĕр пике те курăнмасть.

Ахаль мар-тăр теп Аркадий
Хăвăрт тарчĕ Кăкшăмран.
Ав, мана та дебаркадер
Кăчăк тургрĕ аякран.

## КАЛАСУ

(Ш ӳ т)

— Каҫар та, Кĕтерук, эс кăшт ухмах хĕр,
Эс пурнăҫа пĕлместĕн пурăнма.
Сан пулмаллаччĕ пĕр-пĕр парикмахер —
Мĕн, йывăр-им ҫӳҫ турама, ҫума?

— Эй, ҫук, Натюш инке, манран пиҫеймĕ.
Ҫӳҫ туранать-и манăн алăра?
Яра куна ура ҫинче... Тӳсеймĕп.
Шутланă эп: каятăп маляра!

— Айван теп-иҫ... Сăну-пуҫу илемлĕ,
Ресторанта анчах ĕҫлемелле.
Укҫа тупма та, тăранма та меллĕ,
Пăркаланма кăна кăшт пĕлмелле.

— Натюш инке! Тата мĕскер эс тупрăн!
Пăркаланни илемлĕ-и вара?
Ресторанта хĕвел курмасăр пурăн,
Шутланă эп: каятăп маляра!

— Чипер калаҫ! Унта килĕшмесессĕн,
Эппин, эрех-сăра сутма вĕрен.
Чĕлхи енчен... ҫаврăнăҫуллă эсĕ...
Тĕпне юлать каппи кĕленчерен.

— Темле, инкеҫĕм. Кăмăл пулмасассăн,
Хирсе усаймăн манăн ҫăвара.
Ихĕлтетсе тăма-и? Ан та асăп.
Шутланă эп: каятăп маляра!

— Ай-юй, капла мана эс кӳрентертĕн.
Мĕн лайăххи-ши ҫав хура ĕҫре?

Вăт хуйхă аçупа аннӳн: ӳстер те,
Каллех пĕр саншăн çунтăр-и чĕре?

— Атте-анне хуйхи, инкем, яланлăх.
Ӳссен те, эс вĕсемшĕн — сăпкара.
Халь стройкăра ĕçлет пур çамрăк халăх,—
Шутлапă эп: каятăп маляра!

— Тĕлĕнтерсе ан тăр-ха эс, тăм-паттăр...
Апла-тăк тух ахфицера качча.
Сана вăл ырă пурнăç туса патăр,
Ăна эс йăх тăсмалăх — пĕр ача.

— Вăт халь, инкем, сана çырлахтаратăп.
Ĕмĕтĕмри чăнах та салтакра.
Тавăрăнсан, тӳрех качча каятăп.
Вăл ман — маляр! Каятăп маляра!

# КĔРЕКЕ

## Куçарусем



## Александр ТВАРДОВСКИЙ

### ВИЛНЁ САЛТАК ЫВӐЛНЕ

Салтак ачи, ас̧усӑрах ӳссе,
Вӑхӑтсӑрах арс̧ын шутне эс кӗтӗн.
Анчах, аттес̧ӗм пӗтрӗ-с̧ке тесе,
Эс пурнӑс̧ра-и пач с̧ухалӑн-с̧ӗтӗн!

Пурӑнпӑ чух хӑй мӗн юратнине,
Чӗррисене мала чӗнен вӑя та
Ас̧у сан валлиех хӑварнине
Эс тивӗс̧лӗ пӗлме те, ӑнланма та.

С̧апах айванлӑхпа е с̧амрӑкран
Сасартӑк с̧ул с̧инче эс такӑнсассӑн,
Е хӑвӑнтан килмен ӑнсӑртлӑхран
Чыс, тивӗс̧, ӗс̧ тенисене мансассӑн,

Тус-юлташпа сутсассӑн пикекре,
Пӗртен-пӗр аппӳне кӳрентерсессӗн,
Суйсан тата чееленсен ӗс̧ре,
Усал с̧ынпа пӗр евӗр чап илсессӗн,—

Чи малтанах, ачам, пӗччен чухне
Асна эс ху кам ывӑль пулнине.

## Владимир ФИРСОВ

* * *

Кун хыççăн куп ялтан инçетерех
Кайса пыруçăн чунăмпа туятăп:
Манран инçе пулсан та, пурпĕрех
Ăна хĕрӳллĕнрех халь юрататăп.
Çул иртнĕçем утçи те хаклăрах —
Вăл яланах чăп-чăн уяв пулсаччĕ.
Салху масар та маншăн çывăхрах,
Чуна хумхантарать уп сулхăн сачĕ.
Эп вилĕм пирки мар-ха — ку инçе.
Пулать-ха ĕнтĕ пурнăçра темле те.
Анчах тăван енсен шăплăхĕнче
Канăçлăхпа ăс кĕввипе илтетĕп.
Ват масарта выртать тăван-пĕтен.
Хăшне-пĕрне пачах та палламастăп.
Вĕсем пулман пулсан, эп хам та, теп,
Çак çĕр çинче пăлханчăклăн утмастăм.
Чĕррисенчен тăван тек çук ялта:
Сар сăпкана пăрахнă, алă сулпă.
Чăнах-ши çак тавралăх, тупата,
Тахçан вĕсемшĕн те асамлă пулнă...
Ял пурнăçĕ мĕн чухлĕ инçетре,
Эп çавăн чухлĕ ытларах шутлатăп —
Мĕнле-ши пурăнатăп тĕнчере,
Тĕп-тĕрĕс çулпалах-ши ăнтăлатăп?
Тăван çĕршывăм сывлăшĕ — ăшра,
Уп ячĕпех тухать кашни сăмахăм.
Эппин, хăçан пулсан та, малашра
Ялах илсе çитерĕ-ха сукмакăм.

Эп таврăнăп унта яланлăха,
Ял халăхне ытлах чăрмав тумасăр.
Çӳл тӳперен кăна сĕм шăплăха —
Масар çине пĕр çăлтăр ӳкĕ сассăр.

## Владимир ЕВПАТОВ

* * *

Эп хам та çемçешке çын мар,
Çапах, ăш сăмаха туйсассăн,
Тем хускатать те чунăма,
Калас килет: «Яланлăх сапăн!»

Анчах... иртет йăл кулнипех,
Ĕç-пуç çинчен калаçнă майăн
Чуна епле уçса парайăн?—
Шăв-шавсăр, чĕмсĕр эп каллех.

Е хам-и ăнсăртран калатăп
Хĕв шухăша тус-тантăша —
Пăр прĕлет упра, куратăп:
Туять-çке вăл та ман ăшша.

Анчах хуравĕ, мĕн калас,
Виçеллĕ, лăпкă ун, сăпайлă.
Чунне кашни упрать пулас
Тытма хушман илемлĕх майлă.

Мĕскершĕн ку? Мĕнле йăла —
Ыр кăмăлах юлать ыр тавсăр.
Çăлтăрсем çеç çӳлте çапла,
Теп, калаçаççĕ мар-и?.. Тавçăр.

## Иван ПИНЯЕВ

### АНТУН

Ăна фронта илмерĕç:
Курпун, уксах Антун.
Ялта та халĕ терĕç
Май таранах ĕç ун.

Вал званисĕр те чинсăр,
Нимпех те паларман.
Анчах та çак арçынсăр
Арман та аварман.

Паян сарай юсать вăл
Е вутă турттарать.
Ыран сысна пусать вăл
Е шыв курсе парать.

Хăш чух ăна каçкӳлĕм
Салтак матки чĕпет.
Хисеплĕн, килĕшӳллĕн
Чейпе икерч сĕнет.

Çук званиĕ ун, чинĕ.
Кăтри те ылтăн мар.
Ытти — йăлтах арçыннăн,
— Антун, çисем кăшт, лар...

Ĕçет те вăл, шӳтлет те
Ку евĕр каçсенче.
Кĕç чĕлĕмне чĕртет те
Калать:— Ыран ирччен...

Тен, тунсăхĕ пур пулĕ
Чипер салтак маткин.

Ав, куçĕ тө куççуллĕ,
Сывлать хаш!
— Кай эппин.

Каять Антун, тарать ак,
Салху пăхать çав тер.
— Пулăшмалла пулать-тĕк,
Эс ан вăтан, систер.

Антун халь ĕнтĕ ватă,
Вăл ятлă çын ялта.
Ятлах пулсан, чăнах та,
Пурăнтăрах тата.

## Виктор МАЛЫШЕВ

* * *

Путенесем вĕçеççĕ,
Тыр пуссинче макраççĕ.
Ах, çав хĕрсем хитре-çке —
Амăшĕсем упраççĕ.
Каç урама тухсассăн,
Куç хĕррипе пăхсассăн,
Йĕкĕчĕсем те улăп пек,
Пикийĕсем те уйăх пек.
Шыв çийĕн шурă шупăрлă
Ларать пĕр çĕмĕрт капăррăн,
Çĕр каçипех шап-шурă вăл,
Пĕлĕт пырса кăкарăннăн.
Çил пучаха кăшт автăрах.
Кĕске теççĕ хĕр ĕмĕрĕ...
Сар çпвĕтсем, юратăрах,
Кăвак куçсем, çĕр çĕмĕрĕр!

## Станислав РЕПЬЯХ

### АСАМЛĂ КИМĔ

*Черниговщинăри Локниста салинче 1905 çулхи революциллĕ событисене хутшăннă Опанаспа Оксана Стасюксене асăнса*

Ун чухне çур шывĕ, тет, хăпарнă!
Манас çук нихçан та çав куна.
Чиркӳсен мăн чанĕсем янранă,
Кĕлтума чĕнмен вĕсем çынна.
Пуççапмашкăн, пăхăнмашкăн çитĕ!
Ирĕклĕхшĕн паттăррăн тăрар!
Пуянсем те, пуянсен патши те
Ĕççыннисене тек кирлĕ мар!
Çурхи ял çĕн юрăсем юрланă,
Çĕкленсе хуткупăс сассипе.
Аркапми хум евĕр ял тапраннă,
Çывăрман тек йывăр ыйхипе.
Картишри хушăксенчен хаяррăн
Пăхнă тарăхса эрешменсем:
Чăн телей патне чĕнеççĕ мар-и
Çынсене паян çав Стасюксем?
Кимĕре Опанаспа Оксана...
Юрă хыççăн ахрăм илтĕпет...
Çăлтăр, çăлтăр, çӳллĕ улăхсам-и...
Хум, ялав пек, хĕрлĕн чӳхенет.
Çĕр каça хăмач çине тĕрленĕ
Çамрăк хĕр Оксана хĕм-сăмах.
Ак халь «Марсельезăпа» çĕкленнĕ
Хресченсем пуянсене павма.

— Эй, каятпăр!— кăшкăрнă Оксана,
Васкатса пур çамрăк-кĕрĕмĕ.—

Картишне улпут, тен, уçса янă.
Анлă вырăн — ирĕк çӳреме!..
Чылайччен янранă юрă-кулă.
Салара кун пеккине курман.
Тулĕк çав хаваслăх йывăр чулан
Ӳкнĕ çамрăксем çине кайран.
Пиччĕш петнĕ.
Аппăшне — пуç янă.
Решетке картланă ун çулне...
Манар мар ун чух ишме пуçланă
Стасюксен асамлă киммине.

## Яков КОВАЛЕЦ

### ЧĂВАШ ÇĔРШЫВНЕ

Чĕрем çухатрĕ канăçне сасартăк,
Асран кайми тĕлпулăва сиссе.
Десна çинчен эп Атăла куратăп,
Шухăшăмпа инçетлĕхе сирсе.

Чăваш çĕршывĕ! Ешĕл симĕс ен,
Сан ытамнаваскать пăлханнă чунăм.
Пĕр саншăн Çеçпĕл те, Чапай та çуннă.
Сана çын саламлать халь ирсерен.

Сан хулусем те ялусем илемлĕ,
Хăна тесен, ялан та тарават.
Инçе çулусене те кам иленмĕ...
Йĕри-тавра — çĕн сăнлăх, çĕн хăват.

Аваллăх тĕсĕпе çиçет ав Атăл.
Туссем, аван-и? Парăр аллăра.
Эп Хусанкайăн çыранне тухатăп.
Салам мухтавлă шур Шупашкара!

## Дмитро **ИВАНОВ**

### МАДУСЯ

*Мария аппама*

Хистетчĕç аппамсем мана:
— Кала, Дмитро: Мар-рру-ся.—
Пултараймастăм эп çакна,
Тухатчĕ ман:
— Ма-ду-ся...

Эх, ахăратчĕç те вара!—
Чӳречесем чĕтретчĕç.
Пит-куçăм та ун чух, ара,
Чăнах чĕкĕнтĕр пекчĕ.

Е йĕкĕт урампа иртет —
Хур аçи пек утуçăн
Ыйтать:— Аппу мĕн ятлă тет?—
Хуравăм пĕр:
— Мадуся.

Тĕпчерĕ кӳршĕ кинемей
Пĕрре ак куçа-куçăн:
— Аппу сан кам пулать-ха, эй?—
Каларăм эп:
— Мадуся...

Гриць ярăнать тăвайккинче,
Ним хăрамасть, мур пуçĕ:
Ун — кĕрĕк. Çĕлĕк — пуçĕнче.
Анчах ман пур — Мадуся.

Анчах юр тăрăх çаруран
Чупма эп хатĕр уççăн.

Кӑштах шик пур-ха аппамран:
Курсан — вӗтет Мадуся.

Эп кӑшкӑрнӑ, тет, ун чухне
Асапланса выргуҫӑн:
— Вилместӗп!
Час ман пуҫ вӗҫне
Килсе ҫитет Мадуся!

Уйра кӗрленӗ ҫил-тӑман,
Ташланӑ кутӑн-пуҫӑн.
Ҫапах пенициллин шӑпман —
Хӗврех тытнӑ Мадуся.

Кӗҫ эп те акӑ урамра.
(Мана-и чир-чӗр хуҫӗ!).
Аппам атти — ик урамра:
— Эй, курӑр! Эп — Мадуся!

Ҫитет кунҫул кӑнтӑрлана.
Ҫапах, хӗн-мӗн куруҫӑн,
Пӗр шухӑш хускатать чуна:
«Мӗн тӑвӗччӗ Мадуся?»

...Пӗр асатте тӗл пулчӗ ак —
Чеен пӑхать ун куҫӗ:
— Дмитро, ӑҫта каятӑн ҫак?
— Аппам кӗтет. Мадуся.

## Александр ОЛЕЙНИК

### ÇЕÇПĔЛ ЯЛАН ЧЕЧЕКРЕ

Çав вăхăт хĕлĕх пек янранă...
Ун чух, çап-çамрăк та хастар,
Хăйне вал çеçпĕл ятне панă —
Сăлтавсăр-йӳтĕмсĕрех мар.

Çав вăхăт март пек пăтрануллăн
Çĕкленĕ чух боецсене
Шăратнă Çеçпĕл пултаруллăн
Десна çинче хăй юррине.

Кам чунĕ ирĕк те кăварлă,—
Итленĕ пурте çав юрра.
Итленĕ салтаксем каварлă,
Выç варлă, юнлă окопра.

Паян та ман çунталă тапхăр
Хăпарнă майăн уçлăха
Эпир ун юррине юрлатпăр,
Пăхса хитре малашлăха.

Юрлать Попович, Днепр ашĕ.
Юрлать пĕрле пур кăмăлтан
Ун тусĕ, Атăлçи чăвашĕ —
Мухтавлă кăйкăр Андриян.

Çур кунĕ çеçпĕле чун панă,
Анчах вăл пĕтмĕ кĕркунне —
Ĕмĕрлĕхех хĕвел çутатнăн
Çутатĕ пирĕн чунсене.

## Борислав СТЕПАНЮК

### ХӖЛЛЕ

Тăман кашти арканчĕ,
Витет юр тĕнчене.
Выртать çул авкаланчăк
Вĕçен çуна айне.
Ан тив, сивви хăраттăр,
Хăраттăр шартлама —
Яш-кĕрĕм пурпĕр паттăр,
Тухать вăл юр тытма.
Пĕтĕрĕнет ун çийĕн
Шап-шур çеçке пек юр.
Темскер хуллен асилнĕн
Çĕр тĕлĕрет пек,— кур.
Илтмест çĕр ыйхă витĕр
Юр хыттăн çунине.
Çапах та — вăхăт çиттĕр!—
Пуçланĕ çуркунне.
Каллех çĕр чечекленĕ.
Унтан каллех вара
Пуян тырпул çĕкленĕ
Тăван тавралăхра.
Ак юрă янăрарĕ
Юр витĕр пĕрхĕнсе.
Яш-кĕрĕм чунĕ мар-и —
Юрлас килет вĕсен.
Кун каçипех юр тытрĕç,
Ĕçлерĕç юнашар.
Тен, савнисем те тупрĕç.
Ку начарах та мар.
Эх, тур лашийĕ вирхĕнтĕр!
Юр виттĕр тĕнчене.
Юр сахăр евĕр ирĕлтĕр,
Ӳксе тута çине.

**Юсиф ГАСАНБЕК**

## ТĂВАН ÇĔРЕ КИЛЧĔ ÇУРКУННЕ

Çурт тăррисем пăра ирĕлтереççĕ,
Çулсем те татăлнă унта-кунта.
Мĕн чухлĕ шыв урамсенче, курсамăр—
Улт-çичĕ кӳлĕллĕх пуль, тупата.
Шур çырмасем те, шурă хĕлĕх евĕр,
Пуçларĕç япрама ту аркинче.
Ик турăн мăйраки шалтлатрĕ хыттăн
Çурхи туйсен хавас уçланкинче.
Кашни чечекĕн хăлхинче çуталчĕ,
Вуншар тĕспе çиçсе, чечен алка.
Те туйăмсем çине те сахăр сапрĕç —
Таçта та асăрхатăн пылака.
Чиперккесен тутисене илепиĕ
Черчен тюльпанăн çулăм-çеçкисем.
Пыратпăр — мăкăнь шăршипе минрепĕ,
Çула çухатнă савнисем.
Туйăмпала вăйланнă кĕлесем те
Ватаççĕ чăл та пар сукмак чулне.
Япрарĕ кулă, сывлăша хускатрĕ,
Вут-çулăм ӳкрĕ сăн-питсем çине.
Ав, пуля пек, чул çинелле вĕçтерчĕ
Пĕр тумламне чарусăр шывсикки,
Арканчăксем хĕвел патне çул тытрĕç,
Куçа çиет вĕсен çут йăлтăркки.
Таçта кĕрлерĕ аслати хаваслăн,
Чĕтретрĕ, кĕçентерчĕ ăйăра.
Çĕртен тин уйăрăлнă кайăк евĕр
Вăл тапрĕ сикрĕ, ярăнчĕ вара.
Хĕп-хĕрлĕ çулăм чĕлхисем çуларĕç
Уçланкăсен таса ешĕллĕхне.
Мăнаçлă ăмăртсем вĕççе хăпарчĕç
Тусен шур юрлă тăррисем çине.

Каллех, каллех тăрна пулкки сас пачĕ,
Каллех хавхалапса сикет чĕре.
Ют çĕрсенче çӳренĕ çуркуннесĕм
Каллех халь таврăнчĕ тăван çĕре.

## Геворг ЭМИН

* * *

Урам çиййĕн юр вĕçет,
Юр вĕçет те ирĕлет.
Урампа сар хĕр утать те
Йӳçĕ куççульне çăтать.
Ма ăна сил тĕрткелет?
Ма куççуль те юр çăтать
Çĕп çул умĕн сарă хĕрĕ?
Çитнĕ пуль-çке ун черет
Пурнăç пушине курмашкăн,
Телей сахалне туймашкăн.
Çавăнпах-çке хĕр йĕрет,
Тĕлсĕр урампа çӳрет.
Йӳçĕ куççульне çăтать вăл,
Аллипе çилтен тытать вăл,
Теп, чăпах та шухăшлать:
Çук — телей. Телей — тарать...

Йăлт, çак юр пек, ирĕлет,
Йăлт, çак юр пек, çухалать.

**Владимир ПАВЛОВ**

## ÇĔРЛЕХИ БАЛЛАДА

Çăлтăрсем йăлкăшма тытăнсассăн,
Пур тавралăх ыйха ăсансан,
Çӳллĕ сăрт хыçĕнчен такан саслăн
Сиктерет учĕпе партизан.
Çĕр чавать-çке чĕрпи хура турăн,
Юланутçă мала ăнтăлать.
Шăп вăрман — те калас шухăш пур ун,
Те асамлă юмах вал хайлать.
Тинкерет партизан сĕмлĕх витĕр:
Курăнмасть-ши хăрушлăх умра?
Лизавета, тен, тухĕ те ыйтĕ,
Хапхине уçса кĕртĕ вара:
Тен, асилĕ унччен кĕтнине те
Каччăна юратса пăхнине,
Аларан çивчĕ хĕç панине те
Ун утне çавăтса тухнине?..
Çăлтăрсем йăлкăшма тытăнсассăн,
Пур тавралăх ыйха ăсансан,
Çӳллĕ сăрт хыçĕнчен такан саслăн
Сиктерет учĕпе партизан.
Тен, ку леш харсăр каччă-ши пулчĕ,
Ялĕнчен тухпăскер вĕçтерсе?..
Ах, миçен шырланта выртса юлчĕç
Çавăн пек çамрăках паттăрсем?
Ун çинчен аннесем пире калĕç
Беларуçăн вăрманĕ енче —
Сахал мар маттурсем сая кайрĕç
Иртнинче те хальхи вăрçинче...
Ку вара... ку пит йывăр аманнă,
Походрах вăл çухалнă пĕр ир...
Ун савнин хĕрĕпе алла-аллăн
Ăна хирĕç тухатпăр эпир.

## Петрусь МАКАЛЬ

### УРĂ ПУÇА МУХТАСА

Хама пачах та çылăхсăр тееймĕп:
Эрех меп шăршлине, чăнах, пĕлетĕп.
Çапах уррисене мухтать ман юррăм —
Мĕн ĕмĕр тăршшĕпех çын пултăр урă.
Курсам: сĕтел çине лартса тултарнă...
Кĕленчесем киреметсем пек ларнă.
Пăшал кĕнçи пек, пăккисем тĕллеççĕ —
Кĕçех, кĕçех атакапа вĕçеççĕ.
Вĕсен умпе эсех чĕркуçленетĕн —
Телей-и, хуйхă-и — пĕрех ĕçетĕп.
Ак ĕнтĕ черккÿпе эс ÿпĕнтертĕн,
Пĕр талăклăх куп çутипе сÿнтертĕн.
Чĕтрет йĕпе пÿрнÿсенче сан кашăк.
Эс — вăрă, тăванпа та çаратасшăн.
Арăмунпе вăрлатăн эс ачашлăх,
Ывăлунпе юмах вăрлатăн каçлăх.
Ултавлă ырлăха сутăннăскерĕн,
Пурпе те сан хаклас килет пĕрерĕн.
Тархасшăп: черккÿнте сан лак та тикĕт,
Чи çывăх юлташнах йĕпет те типĕт.
Хăравçăн пĕртăванĕ, таркăп, тăлăх,
Таратăн хăвăнтан шуçлак çул тăрăх.
Мăлатук пек чĕлхÿпе тек çапатăн,
Шăватăп, аркăрап мапа çаклантăп...
Эппин, янратăр хыттăнрах ман юррăм —
Мĕн ĕмĕр тăршшĕпех çын пултăр урă.
Ÿсĕрĕлме пÿрнех пулсан ăпа,
Вăл ÿсĕрĕлтĕр чуптуса кăна.

## Евдокия ЛОСЬ

* * *

«...Пулмăсăн илемлĕ, пулăсăн телейлĕ»—
Çак сăмах тĕшшийĕ тĕлĕнтермĕш селĕм.
Акăш юррипе пĕр ман ачалăх кайрĕ,
Тантăш хушшинче эп юлашки пулмарăм.
Çукчĕ мул-пуянлăх,— пурпĕр кулянмастăм,
Сивĕ сăмахпа та шăпама вăрçмастăм.
Вăхăт çеç иртет те, акăш çухалать те,—
Шур мĕлкешĕн питĕ чунăм тунсăхлать тем...
Сивĕ çилĕ кастăр, чĕрене кисреттĕр,
Аслатиллĕ çумăр кунсерен ислеттĕр,—
Çак сăмах тĕшшийĕ пурпĕрех-çке селĕм:
«Пулмăсăн илемлĕ, пулăсăн телейлĕ».

## Янис ПЕТЕРС

* * *

Арçыннăн çуртне кĕрет те хĕрарăм,
Чи йывăр суран та сурма пăрахать.
Тăм савăт-сапа та юрлать çаврăм-çаврăм,
Вут-хĕм вучахра чечекпе йăмăхать.

Арçыннăн çуртне кĕрет те хĕрарăм,
Пĕчченлĕх тарать, юрату вăй илет.
Пĕри: «Маншăн хăтлăх — вучахăм та арăм».
Тепри: «Упăшкам инкекрен хӳтĕлет».

Вĕсен ачисем вĕсем хыççăн кĕреççĕ.
Халь вилĕм те вăйсăр вĕсен умĕнче.
Хĕр — амăшĕ пек, ывăль — ашшĕ пек, теççĕ...
Çапла çирĕп халлă тăрать çут тĕнче.

## Мустай КАРИМ

* * *

Асран каймп тăван кĕтесĕм,
Пĕр вĕçĕм çул çӳренĕрен
Мана ан ӳпкелеччĕ эсĕ,
Ан ӳпкелеччĕ, ан кӳрен.

Çĕр çăмхине çăмхаланишĕн
Инçе çулсеп çипписемпе,
Шыв пек юхса, çил пек вĕçнишĕн
Каçарччĕ пысăк тӳсĕмпе.

Каçар — тĕлпулусем хавасла!
Чăпах та, тăвăр-мĕн тĕнче.
Пире яланлăх уйăраслăн
Выртмасть пĕр çул та çĕр çинче.

Сап шывусеп ахаль-им шавĕ
Кĕрлет юрмай кăкăрăмра?
Çăлтăрусен черчеп ялтравĕ
Ахаль вылять-им куçăмра?

Таçти ютра çӳренĕ чух та
Вакран сив шыв ĕçеттĕм те,
Уп тарăпăшĕнче эс çуттăн
Çиçсе çĕклеттĕн ĕмĕте.

Пĕл, ман тымарăмшăн эс — нӳрĕк,
Ман çулçăсемшĕн — çутă эс.
Эп сансăр тăлăх чунлăп çӳрĕп,
Санпа кăпа эп вăйлă, çирĕп,
Асран каймп тăван кĕтес.

## Муса ГАЛИ

* * *

Каçĕ тăрăччĕ. Сенкерччĕ çутăсем.
Çăмăл-çăмăл, лăпкă-лăпкă — шухăшсем.

Шухăшсем — хаваслăх, савăнăç çинчен,
Шухăшсем — чи çывăххи, хакли çинчен.

Йăпăрт çеç сана эп пăхрăм та куçран,
Чуп çĕклепчĕ сенкер пĕлĕтсем таран.

Ним те мар халь ăмăртпа пĕр тан вĕçме,
Ним те мар халь çăлтăрпа пĕр тан çиçме.

Татса кил-ха терĕн эсĕ чечексем.
Татса килĕп йăлтăр çутă çăлтăрсем.

Акăш çулĕпе вĕçсе малтан мала,
Сан патна ансан, пит лайăх пулмалла.

Анăп акă. Акă таврăнăп пĕрре.
Сап мĕлкӳ хускалĕ çут чӳречере.

Çул-йĕрсем, кунсем ăсанĕç инçете —
Ппре урăх уйăраймĕ нимĕн те.

Йăпăрт пăхăп та ун чух сана куçран,
Чун çĕклепĕ сенкер пĕлĕтсем таран.

**Ильдар ЮЗЕЕВ**

## ВУНВИÇÇĔМĔШ ÇИНЧЕН ХЫВНĂ БАЛЛАДА

*12 джалиловеца асăнса*

Вуниккĕн вĕсем Моабит тĕрминче.
Вуниккĕн пурнаççĕ çынсен асĕнче.
«Çапах вĕсем пулнă вунвиççĕн, вунвиççĕн!»—
чĕрем кăшкăрать каçсенче.

Вунвиççĕмĕш... утнă пĕрлех вĕсемпе
Асаплăх та хурлăх сукмакĕсемпе.
Вăл паттăррăн утнă; вуникĕ джигит та
çĕклеппĕ вара чунсемпе.

Вуниккĕн вĕсем, приговорĕ — пĕрре:
Кĕç касăлнă пуç хыттăн ӳкĕ çĕре...
Вунвиççĕмĕш ак тăвапла сывпуллашрĕ,
Çухалче таçта, инçетре...

Энир наян кун та шыратпăр ăна.
Хутсем пĕлтереççĕ: вуниккĕн кăна.
«Çапах та вунвиççĕмĕш пулнă-çке, пулнă!»—
чĕрем кăшкăрать тек мана.

Вунвиççĕмĕш кайрĕ. Нимле чул хӳме
Меслет тупаймарĕ ăна хĕстерме.
Пĕлетĕп, вăл — чĕрĕ. Курасчĕ ăна ман,
анчах ун çулне çук пĕлме.

Вунвиççĕмĕш... Чăп та, пĕрре шугласан,
Вăл халь çӳрес çук çав хăйне мухтаса.
Герой вăл сăпайлă. Ак мĕншĕн çапах эп
çӳретĕп ăна шыраса.

Тен, тавçăраймасăр хăй паттăррине,
Çĕршывшăн пуç хунă мĕнпур çынсене
Куллен асилсе пархатарлăн, асаплăн,
вăл халь пурăнать пулинех.

Вунвиççĕмĕш... Ирĕлчĕ вăл халăхра.
Вăл, ирĕклĕскер, сывлăшра халь, хумра.
Вăл — кĕвĕ!— çĕршыв пушипе асапланчĕ
вуниккĕшĕпе ушкăнра.

Эс, юрă, тăвап тутар халăх юрри,
Вунвиççĕмĕш пултăн йыхра паттăрри!
Кĕвви пурăнать ун, вилмест, эп пĕлетĕп.—
эх, маншăн вăл тупăнтăр-и...

## Вера БОЯРИНОВА

### АННЕ ЕВĔР ТĂВАН ÇĔРĔМ

Ылтăн ыраш, ылтăн тулă
Уя-хире килĕшет.
Лаштра çĕмĕрт, йăрăс хурăн
Киле-çурта килĕшет.
Икĕ витри, шуç витри,
Çут çăлкуçа килĕшет.
Эрешленĕ картлăмми
Хулпуççие килĕшет.
Пурçăн кĕпе, шур шупăр
Пӳ-сийĕме килĕшет.
Палан тĕслĕ ярăм шăрçа
Хура куçа килĕшет.
Анне евĕр тăван çĕрĕм
Чун-чĕреме килĕшет.
Кунта пурнăçăм-телейĕм —
Юрлас-ташлассăм килет.

## ТУПМАЛЛИ

Автор умсăмахĕ . . . . . 3

**Кун вĕçленчĕ — кун пуçланчĕ...**

«Кĕр çути çывхарчĕ...» . . . . . 5
Пурнăç юрри . . . . . . 6
«Синкерлĕ пулĕç-и çулсемĕр...» . . . 7
«Çăтти-çатти! Çăтти-çат!..» . . . . . 8
«Мĕн вăл — ансăр...» . . . . . 9
Пĕр юлташа . . . . . . 10
«Хастарччĕ ăсĕ, кĕлетки маттурччĕ...» . . 11
Тăлăх арăм . . . . . . 12
«Лаша пекех вăл — çыракан...» . . . 13
Телей . . . . . . . 14
Тунсăх . . . . . . . 15
«Шăпа вылянчăк та чее...» . . . . . 16
Саманта . . . . . . 17
Ачама . . . . . . . 18
Кĕрхи юрă . . . . . . . —
Мухтав — Мускава . . . . . . 19
«Виле кӳми пек...» . . . . . . 20
«Чăнах сăлтав пуртан...» . . . . . . 21
«Ăнланăрччĕ, тархасшăн...» . . . . 22
Нефертити . . . . . . 23
«Сентябрь шăппăн çунчĕ кайрĕ...» . . 24
«Шур кăпăкăн юхать ман ут çилхи...» . 25
Çыравçă-тусăмсене . . . . . . 27
Мăкăнь . . . . . . . 28
Еç çынни . . . . . . . 29
Ирхи Шупашкар . . . . . . 30
«Эпир çĕр çинчех-ха çуралнă...» . . . 31
«Ах, Кратово çăтмахĕ...» . . . . . 32
«Чăн, утмăлтурат пек тӳпе...» . . . 33
«Çук, вилмĕ пĕтĕмпех...» . . . . . 34
Пĕчченлĕхе хирĕç . . . . . 35
Фотограф . . . . . . . 37

Çĕр — пурăнма . . . . . . 38
Пăхса кăна ларакансене . . . . 39
«Паян — классикăллă хĕл кунĕ...» . . . 40
«Ах, туйăмсем! Хăш чух эсир çаплах...» . 41
Миниатюрăсем . . . . . . . 42
Фиаско . . . . . . . . 47

### Тĕлĕксен кулянчăк тĕкĕрĕ

Туссене . . . . . . . . 49
«Хура çăхан кранклатрĕ пуç çинче...» . . 50
«Пăшăлтатса анчах, савниçĕм...» . . . 51
«Пĕр майлă пурăнăç щăватчĕ ман...» . . —
«Выртаççĕ тутлă тĕлĕксем...» . . . . 52
«Пĕр рыцарь килет çапăçу хирĕнчен...» . . 53
«Юратмастăн мана, пĕлетĕп...» . . . 54
«Чăрсăр çилсем ĕрĕхеççĕ...» . . . . 55
«Йывăр мар курăнмашкăн çуттăн...» . . 56
«Çук, паян мар, паян мар...» . . . —
«Кĕрхи вăрман уçланкинче — çăлкуçĕ...» . 57
«Çухал, кичемлĕх! Тĕссĕр тĕлĕксем...» . . 58
«Паян хĕвел пăхмарĕ темшĕн...» . . . —
Утмăлтурат . . . . . . . 59
«Çут тĕнче те сан пек» . . . . . —
«Эп канăçсăр вилетĕп пуль...» . . . 60
«Паян тĕтреллĕ кун...» . . . . 61
«Калăхах юптаратăн, чунăм...» . . . —
Апрелĕн пĕрремĕшĕ . . . . . . 62
«Такам ăрăмланăн сасартăк çухалчĕ тĕнче...» 63
«Тĕл пултăм эп сана пĕр ăшă, çутă кун...» . 64
«Çурхи çутçанталăк хĕвел хĕмĕпе йăлкăшатчĕ...» 65
«Çур çилĕ пек, яту çемçе те уçă...». . . 66
«Хам вилĕмрен хăрами пултăм...» . . . —
«Çав вăхăта мĕнле ят парăп?..» . . . 67
«Чулочка» хĕрĕсем . . . . . 68
«Макăр, Муза, макăр...» . . . . 69
«Эс тем калатăн...» . . . . . —
«Аллу пите кăшт сĕртĕнет те...» . . . 70
«Кăвак куççен ытамĕ...» . . . . —
«Ах, Матак, эп сана саваттăм...» . . . 71
Ухмаха ерни . . . . . . . 72
Çуралнă кун . . . . . . . 75
«Сивĕ çил вĕрет халь кассăн-кассăн...» . . 76
«Ку хулара эп тăр-пĕччен...» . . . . 77

«Халь тӗлӗк те, юмах та ҫук...» . . . 78
Ӗнтрӗк . . . . . . . . 79
«Кӗнекесем ҫинчен мана калатӑн...» . . 80
«Сасартӑк килчӗҫ кӗчӗҫ асӑма...» . . . —
Колькӑпа стройка . . . . . . 81
«Лапка-лапка ҫӑвать шур юр...» . . . 82
«Тӗнче сарлака та тарӑн...» . . . . . —
«Каҫ сӑнӗ ҫапрӗ те куна...» . . . . . 83
Кӑкшӑмри перестройка . . . . . 84
Калаҫу . . . . . . . . 86

**Кӗреке (куҫарусем)**

*А. Твардовский.* Вилнӗ салтак ывӑлне *(вырӑсларан)* . . . . . . . . . . . 89
*В. Фирсов.* «Кун хыҫҫӑн кун ялтан инҫетерех...» *(вырӑсларан)* . . . . . . . . 90
*В. Евпатов.* «Эп хам та ҫемҫешке ҫын мар...» *(вырӑсларан)* . . . . . . . 91
*И. Пиняев.* Антун *(вырӑсларан)* . . . 92
*В. Малышев.* «Путенесем вӗҫеҫҫӗ...» *(вырӑсларан)* . . . . . . . . . . 93
*С. Репьях.* Асамлӑ кимӗ *(украинларан)* . . 94
*Я. Ковалец.* Чӑваш ҫӗршывне *(украинларан)* . 95
*Д. Иванов.* Мадуся *(украинларан)* . . . 96
*А. Олейник.* Ҫеҫпӗл ялан чечекре *(украинларан)* . 98
*Б. Степанюк.* Хӗлле *(украинларан)* . . . 99
*Ю. Гасанбек.* Тӑван ҫӗре килчӗ ҫуркунне *(азербайджанларан)* . . . . . . . . 100
*Г. Эмин.* «Урам ҫийӗн юр вӗҫет...» *(эрменлерен)* . 101
*В. Павлов.* Ҫӗрлехи баллада *(белорусларан)* . 102
*П. Макаль.* Урӑ пуҫа мухтаса *(белорусларан)* . 103
*Е. Лось.* «Пулмӑсӑн илемлӗ, пулӑсӑн телейлӗ...» *(белорусларан)* . . . . . . . 104
*Я. Петерс.* «Арҫыннӑн ҫуртне кӗрет те хӗрарӑм...» *(латышларан)* . . . . . . . . —
*М. Карим.* «Асран каймн тӑван кӗтесӗм...» *(пушкӑртларан)* . . . . . . . . 105
*М. Гали.* «Каҫӗ тӑрӑччӗ. Сенкерччӗ ҫутӑсем...» *(пушкӑртларан)* . . . . . . . 106
*И. Юзеев.* Вунвиҫҫӗмӗш ҫинчен хывнӑ баллада *(тутарларан)* . . . . . . . . 107
*В. Бояринова.* Анне евӗр тӑван ҫӗрӗм *(мариллерен)* . . . . . . . . . . 108

**Юрий Айдаш**
**(Юрий Григорьевич Григорьев)**

**ШĂПА**

**СУДЬБА**

Стихи

На чувашском языке

Редактор **А. А. Тимофеев**
**Художник В. А. Смирнов**
Художественный редактор **Г. С. Самсонова**
Технический редактор **Л. К. Егорова**
Корректор **Н. П. Печникова**

ИБ 2513

Сдано в набор 26.10.90 г. Подписано к печати 27.02.91 г. Формат 70×90$^1$/$_{32}$. Бумага офс. № 2 кн.-журн. Гарнитура обыкновенная новая. Печать высокая. Усл.печ.л. 4,1. Усл. кр.-отт 4,24. Учетно-изд. л. 4,19. Тираж 2000 экз. Заказ № 2967. Изд. № 21. Цена 40 коп.

Чувашское книжное издательство.
428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4

Типография № 1 Государственного комитета
Чувашской ССР по делам издательств,
полиграфии и книжной торговли.
428012, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

40 пус



ЧӐВАШ КӖНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ